Инв. № 3109
41-201

Г. САВГАЙ

# ТИВЛЕТ

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
« 18 » июля 1941 г.
Подпись Ласточкин

Г. САВГАЙ

# ТИВЛЕТ

*ОЧЕРКСЕМПЕ
КАЛАВСЕМ*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ☉ 1941

# АНЛӐ АМУР

## I

Инҫетри Хӗвелтухӑҫра шывсем сасартӑк тулса, сасартӑк чакаҫҫӗ те шарлакланса юхаҫҫӗ. Амур та ҫаплах.

Атӑл, Дон, Днепр, Волхӑв тата ытти шывсем те, ҫуркунне ҫырана вырнаҫаймиех тулса, талкӑшпех сарӑлаҫҫӗ. Анчах Амур йӑлтах урӑхла. Вӑл хӗле кӗрес умӗн чакса, ӑшӑхланса юлать, ҫаплипех хӗл каҫать, ҫуркунне те, шӑрӑх ҫура та ҫавнашкалах икӗ ҫырана нимӗн хускатмасӑрах юхать. Амур августӑн юлашки кунӗсенче тулма пуҫлать вара. Хӑшпӗр ҫул Амур ҫичӗ-сакӑр метр таран хӑпарать. Ҫырансене пачах пӑхӑнмасть вӑл ун пек чухне. Вӑл Манчжури ҫыранӗсене те, Совет ҫеҫен хирӗсене те йӑлтах ҫавӑрса илсе, тӑрна куҫӗ пек, тӑп-тӑрӑ хумлӑ ҫивиттипе витсе хурать.

Ҫак анлӑ шывӑн „ӑс-хакӑлне" пӗлмелле мар ҫав хӑш чух... Амур ӗмӗр-ӗмӗр шуралса выртакан юрпа витӗннӗ ҫӳлӗ тусем хуш-

шинчен пуçланса юхса выртать. Çав çӳлĕ тусем июньпе июль уйăхĕнче хĕвеле тӳсеймеççĕ; хăйсене хупласа тăракан шурă чатăрсене шăратса, аналалла ăсатаççĕ. Çапла, çичĕ пин те çичçĕр çитмĕл çичĕ сăрт çинчен тенĕ пек, пухăннă шывсем тискеррĕн, хăйнехăй хĕссе аналалла васкать; хăвăрт юхать вăл сăртсем-тусем хушшипе, этем ури пырса кĕмен аслă вăрмансем витĕр, куçпа виççе илейми анлă çеçен хирсем урлă...

Амур тăрăх аналалла ишме çăп-çăмăл: вирлĕ юхăм сана хăвăрт илсе анать. Анчах тăвалла ишме хĕн вара, умран чăкрашлăн чышать те хыçран хăюллăн туртать...

Чыхăнса юхнă пиркиех пулас, Амур мĕн пуçламăшĕнчен йăлт тинĕсе тухиччenex, юплĕн-юплĕн, темиçе çĕр çулпа юхса, темĕн чухлĕ утрав тунă. Çуллахи шăрăхра Амур çыранĕсем хĕсĕнеççĕ, утравсем типпе юлса асланаççĕ.

Хабаровск хулинчен 250 км. тăварах Амура Сунгари юхса тухать. Ку тĕлте Амур тăватă пая пайланса, тăватă юпă пулса юхать. Пĕри—Куккел юппи, тепри—Вăтам юпă, виççĕмĕшĕ—Болд юппи, тăваттăмĕшĕ—Амур хăй. Çак тăватă шыв юппи хушшинче—утравсем: икĕ тĕнчене уйăрса тăракан шыв варринчи утравсем. Ултă çул ĕлĕкрех, 1929 çулта нумай курнă та нумай тӳснĕ ку

утравсем. Тĕнче хирĕçĕвĕсен тĕввисене салатма шутланă вĕсем.

Пăрахутсем Амурпа Вăтам юпă тăрăх çеç çӳреме пултараççĕ. Тепĕр икĕ юппи ансăр та ăшăх.

Вăтам юпă—чи тарăнни. Вăл Амуртан икĕвиçĕ хут тарăнрах, унăн тарăнăшĕ 36 метр тарăн. Ку юпăра шыв ăраснах хăвăрт та тискер юхать: унăн хăвăртлăхĕ—12 километр сехете. Анлăшĕ çур километр ытларах пулин те, унăн урлă ишсе каçма, лайăх ишекенсем те, пурте пикенсех каймаççĕ. Тулăх вăхăтра Амур мĕне тĕл пулнă çавна çавăрса илме хапсăнать. Мĕн чухлĕ вăрман юхать пулĕ ун тăрăх çу каçа! Вăтам юпă Амуртан та чарусăртарах. Вăл кирек мĕне те, пĕр çавăрса илсен, вĕлт! анчах ăсатать е тӳрех тарăн тĕпне путарать. Лаша шыва кӳртме çук Вăтамра. 1929 çулта шур бандитсенчен татăлса юлнă „Фугдин“ ятлă лаша, ӳпре-пăвансенчен çăлăнасшăн Вăтам юппа кĕнĕскер, каялла тухма тесе темле ишсе те тухаймарĕ.

Этеме те тиркесех каймасть Вăтам юпă. Акă мĕн чăн пулнине каласа парасшăн эпĕ сире.

Амурăн çурри—пирĕн шыв, çурри—Манчжоу-Го шывĕ. Ишес мĕн пулсан çавна асра тыт! Ахаль фарватĕртен иртсе леш енне кайса лекме пулать. Пĕр унта лексен, мĕн

пуласси паллă вара. Япони çарĕн чикĕ тăрăх юланутпа каллĕ-маллĕ кастарса çӳрекен салтакĕсем тӳрех сырса илетчĕç сана. Пĕр вĕсен аллине лексен, вĕçерĕнĕп тесе ан та ĕмĕтлен, ан та шухăшла: сан ĕмĕту вырнаçуллă пулас çук; шухăшланă шухăшу çитес çук.

Пуринчен ытла Хĕрлĕ Çар служащисене тытасшăн çунаççĕ Япони çарĕн мула хапăл тăвакан офицерĕсемпе салтакĕсем, мĕншĕн тесен, кашни красноармеецшăн 100 иен, кашни командиршăн 500 иен укçа тӳлет вĕсене Квантун çарĕ.

„Ĕçлесе тупас" теççĕ мĕн пĕрисем, ĕслетнĕ йытă пек чупса.

## II

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче кавасакипе пĕр яла кайса килме тиврĕ. Часть командирĕ ĕç хушрĕ те... Çул 30 çухрăм. Инçех мар. Анчах кавасаки шанчăксăртарах-çке! Кавасаки вăл— моторлă катер. Кăш ĕлĕкрех китаецсен пăрахучĕ пулнă вăл.

Ватăлнă ку кавасаки. Начар. Тата ахаль те китаецсен техники аваллăха асăнтарать. Çаплах ерипен çӳрекелетпĕр эпир унпала. Моторĕ ватă, лаша майлă хартлатать пулин те—ĕçлет.

Вăтам юпă тăрăх çапла чипер пынă çĕртех:—Командир юлташ! Кăштах чарăнса тăма лекет пулĕ: мотор ĕçлесшĕн мар, подшипниксем ирĕлеççĕ...—терĕ Рейнвальд, моторист.

— Чарăнăр. Анчах мотора çитес яла çитсен юсăпăр; кунта нумай тăрас мар.

Кăшт тăрсан, татах тапрантăмăр. Мотор чыхăнкаласа пыратчĕ ку майĕпе.

Кавасаки çинче 30 çынна яхăн. 10-шĕ командирсем. Хăшĕ отпуска, хăшĕ урăх ĕçпе яла, Биробиджана çул тытнă.

Вăтам юпăран Амура тухасси нумай та юлманччĕ, пирĕн кавасакин моторĕ сасартăках ĕçлеме чарăнчĕ. Мĕн тăвас? Çыран çумĕпе юхкаласа пынă çĕртех икĕ командир, çырана сиксе, кавасакине пĕр вăхăта кĕтти çумне туртса çывхартрĕç. Кăштах юсакаласан, татах малалла кайрăмăр.

Амур варрине тухса çитсен, мотор тепĕр хут чарăнса ларчĕ. Çил Манчжоу-Го еннелле вĕрет. Çитменне çил хытă вĕрет, шыва хумхантарать кăна. Хумсем пирĕн кавасакине пĕрех пыра-пыра çапаççĕ те ют çыран çумнелле хĕссе пыраççĕ.

Малтан мотора ĕçлеттерме шанчăк паракан рулевой ерчĕ. Çилĕ, харсăрскер, пирĕнтен тăрăхланă пекех, ют çыран çумнелле хĕсет. 100 метр юлчĕ, 75... 50...

— Шыва сикетӗп те ҫав самурайсен аллине лексе мӑшкӑл курмастӑп, вилӗм хуть те!—тесе кӑшкӑрса ячӗ пирӗн рулевой.

Кам пӗлет, тен Манчжури ҫыранӗнчи хӑвалӑхран Япони салтакӗсем сӑнасах выртаҫ ҫӗ-и? Эпир хӑйсем патне ҫывхарнине курсанах, вӗсем пирӗн кавасакине ҫаклатсах турт-са ҫывхартнӑ пулӗччӗҫ ҫыран ҫумне.

Хӑшӗ багорпа, хӑшӗ шыв тарӑнӑшне виҫмелли патакпа, хӑшӗ хӑма татӑкӗпе, кам мӗнпе май килнӗ ҫавӑнпа ишетпӗр, пурте ют ҫыран ҫумне пырса лекесрен чунтан кӗрешетпӗр. Пӗрре шикленетӗн ҫав вӑхӑтра, тепре чӑрсӑрланатӑн. Тӳррипех каласан, тӑшман пульли шӑп хӑвӑн чӗрӳ витӗр тухиччен, шӑпах пистолетпа „ӗҫлеме“ шутласа ҫеҫ пыратӑн.

„Акӑ эпӗ большевиксене ҫавӑрса илтӗм“ тесе ҫӑварӗнчен кӑпӑк кӑларса рапӑртланӑ пулӗччӗҫ тӑхлан салтак пек каҫӑр офицерӗсем, хӑйсен мӑн начальникӗ умне пырса ҫурта пек тӳрӗ тӑрса.

„Чӑн малтан эпӑ куртӑм вӗсене, ан тыттар“, тенӗ пулӗччӗ тепри, пӳлӗнсе, мала тухасшӑн, урнӑ йытӑ пек харкашса.

Пирӗн мотор кӗтмен ҫӗртен тӑх!. тӑх! тӑх! теме пуҫларӗ. Пурне те „чун кӗчӗ“ хӗпӗртенипе. Чуптара патӑмӑр эпир ют ҫырантан хӑпса. Тепӗр темиҫе минутран хамӑр чикӗри

утрав çумне пырса та тăтăмăр. Пĕчĕкçĕ çеç утрав пулин те—хамăрăн. Кунта—хăрушă мар, кунта шанчăклă...

Ку утрав çинче хир винограчĕ майсăр нумай. Утравне те çавăнпах „Виноград утравĕ“ теççĕ. Тепĕр сехетрен татах кавасаки çине ларса чип-чиперех çитес яла çитрĕмĕр.

## III

„Йĕпе çине сапа“ тенĕ майлă, каялла таврăннă чух татах тепĕр пысăк инкек курасси инçех те каймарĕ.

Ялтан тухса 20 çухрăм кайсан, эпир Вăтам юппа кĕтĕмĕр. Тĕттĕмленсе килет. Хĕвел Даур тăвĕсем хыçне пытанчĕ.

„Киле çитесси инçех юлмарĕ те-ха“ тесе ăша пусаркаласа пыраттăмăрччĕ. Кабинăра çар кооперативĕн пуçлăхĕ Васильев, уйрăм пай уполномоченнăйĕ Шумкин тата иккĕмĕш моторист Рейнвальд халапласа лараççĕ. Эпĕ корма çинче çутçанталăкпа савăнса, уçă сывлăша кăкăр тулли çăтса пыратăп. Икĕ талăк лайăххăн çывăрман пулин те, ыйăх пĕртте килмест. Каç тĕттĕмĕ витĕр пĕрре Манчжури еннелле, тепре хамăр çыран çинелле пăхса шухăша каятăп.

— Ха-а!—тетĕн ăшăнта.—Пĕр пăхсан, йăлăм майлах туйăнать. Леш енче те, кунта

та çынсемех. Унта та, кунта та сĕткенлĕ çĕр. Анчах икĕ çырана икĕ тĕнче, пĕр-пĕрне хирĕç тăракан, пĕр пĕрине килĕшме пултарайми икĕ тĕнче.

Кунта—ĕççынни хуçа; лере вăл—чура; кунта ирĕклĕх, савăнăç, лере—хĕнхурпа пусмăрлăх. Лере пĕрисем ĕмĕр ĕçлеççĕ те ĕмĕр выçă лараççĕ; теприсем, ĕç мĕн иккенне пачах пĕлмеççĕ пулин те, çипуçлă та, тутă та. Лере—этеме этем кўлсе çўрет.

Шăп çаплалла шухăшланă вăхăтра каваса-ки сулăнса кайнă пек туйăнчĕ. Рулевой кăшкăрса ячĕ:—Руль çĕмĕрĕлсе кайрĕ, эй! Руль çĕмĕрĕлчĕ—терĕ. Кабинăран Рейнвальд васкаса тухрĕ те, руле юсама тесе хўренелле иртнĕ чух, сасартăк шыва ўке пачĕ. Эпĕ—ой!—тесе ятăм, Рейнвальд шыва ўкнĕ вырăна çитсе. Пăхатăп—иртсе çўренĕ чух тытмалли карлăк хуçăлса кайнă иккен. Карлăк пĕр сыппи ман алăра. Рейнвальд хыççăн хам та шыва кăшт кăна сикеймерĕм: карлăкăн тепĕр сыппинчен ярса тытма ĕлкĕрни çăлчĕ. Мĕн пулнине тавçăрса илсе, тўрех хыттăн кăшкăрса яратăп.—Тăрăр, юлташсем!—тетĕп—Тревога! Красноармеецсем пĕр харăс сиксе тăчĕç.—Рейнвальд шыва кайрĕ...—çакна каларăм та, багор ярса тытрăм. Çак хушăрах Рейнвальд шывран кăкăр таран сиксе тухрĕ.—Эпĕ кунта! тет. Мĕн май килнĕ çавна Рейнвальда

тыттарма тăрăшатпăр. Анчах Рейнвальд каç тĕттĕмĕ витĕр пĕрре курăнчĕ те, пачах çухалчĕ.—Женя! Ăçта эсĕ, Женя!—тесе кăшкăрать Владимир Сальгин, часть шоферĕ, кавасаки моторне юсама тесе пынăскер. Кăшт тăрсан, кавасакирен чылай анатарах Рейнвальд татах сасă пачĕ.—Эпĕ кунта! Часрах!..—тет.

Кавасакине аναталла çавăриччен пирĕн Рейнвальд пĕр аллă метра яхăн (тен, ытларах та-и тен) юхса кайнă.

Рейнвальд виçĕ хут кĕпепе, икĕ хут шалаварпа, атăпа, пилĕкĕнче чĕн пиçиххи. Нимсĕр пулас-тăк, вăл часах ишсе тухнă пулĕччĕ. Вăл пирĕн чаçре чи лайăх ишекенсенчен пĕри. Кăнтăрла пулас-тăк, Рейнвальд тумтирпе те аптăрасах каймĕччĕ,—эпир те ăна часах хăваласа çитнĕ пулăттăмăр. Анчах тĕттĕмре ăçта ишмеллине хамăр та пĕлместпĕр. Рейнвальд пĕрре сылтăмран сиксе тухать те, хăйне сĕннĕ багор аврине кураймасăрах çухалать: тепре сулахай енчен тухса пулăшу ыйтать те татах шыва путать...

— Рейнвальд! Ярса тыт акă багортан!—тетпĕр. Вăл курмасăрах юхса иртсе каять.

Арзамас ачи, красноармеец Комаров, çав кунхине анчах юсанă мотора вырнаçтарса лартнă чухне сылтăм аллине хĕстерсе суранланнăскер, Рейнвальда çăлма тесе шыва

сикме пикенет.—Сикетӗп!—тесе ячӗ вӑл. Ҫакна каларӗ те, корма хӗррине тӑчӗ.

— Парӑпӑр сана „сикетӗп“, тесе ятласа кӑшкӑртӑмӑр эпир Комарова Васильевпа иксӗмӗр пӗр харӑс. Васильев ӑна хӑрах аллин чен тытса чарчӗ. Рейнвальд, хӑйне пулӑшу парайманнине кура, ҫыраналла ҫул тытнӑ мӗн. Вӑл татах кӑшкӑрчӗ.—Эпӗ кунта! Часрах!.. тет. Пӑхса курӑнмасть, сасӑ тӑрӑх йӗрлесе ҫеҫ ҫул тытатпӑр эпир. Пӑхатпӑр: пирӗн умра—хӑвалӑх, шыв илнӗ кӗтӗсем. Кунта кӗрсен, кавасакине пуҫпех ҫӗмӗрсе пӑрахма та пулать. Ҫапах та—Рейнвальда ҫӑлмаллах. Мӗн пулать те мӗн килет, тыт катере хӑвалӑха!

Рулевой командир хушнӑ ҫӗрелле тытрӗ. Пирӗн катер ҫурри ытла шыва путнӑ хӑва кӗттисем хушшипе тӗшӗрсе ҫеҫ пырать. Е пӗр-пӗр тунката ҫине пырса перӗнет.

— Командир юлташ!—Катӗре ҫӗмӗрсе пӑрахатпӑр эпир капла,—тет рулевой.—Рейнвальд шыва путать; курмастӑн-и? Тӳрех тыт!—тет командир. Шыв туллӑх. Хӑва кӗттисен тӑррисем кӑна курӑнса ларaҫҫӗ. Кӑштах кайсан, ӑшӑхрах тӗле ҫитрӗмӗр. Пирӗн катер пӗр хӑва кӗттине ҫитсе чашӑр-р-р! турӗ те чӑрӑнса ларчӗ. Шӑп ҫав тӗлте шыв пӗтӗрӗнсе каялла юхать. Ҫакна пула, юхӑма май ҫавӑрӑнса, пирӗн кавасаки ҫумне Рейн-

вальд çитсе тăра пачĕ. Васильев Рейнвальда багор аврипе тӳрех кăкăрĕнчен тĕкрĕ. Çавна сиссе çеç вăл хăрах аллипе çатăртаттарса ярса тытрĕ пулас, ахалĕн куç курмасть, тĕттĕм.

Хăвалăхпа ишсе пынă чух, Рейнвальд пĕр туратран ярса илнĕ пулнă. Турачĕ, хăрăкскер, хуçăлах кайнă унăн. Çанталăк сулхăн, шыв сивĕ. Рейнвальд вăтам шутпа пĕр километра яхăн ишрĕ пулĕ, шăннипе унăн аллисем тыткалаймиех пулнă. Тепĕр аллинчи хăрăк турата шăп хăйне шывран туртса кăлариччен те вĕçертмерĕ вăл.

## IV.

Шывран çăлса илсе, Рейнвальда кабинăна йăтса кĕтĕмĕр. Васильевăн икĕ ещĕк кооператив эрехĕ пулнă пирĕн телей тĕлне, Рейнвальд çийĕнчен кĕпе-йĕмне хывса пĕтĕм кĕлеткине эрехпе çурăмăр та, икĕ-виçĕ хут кĕрĕкпе чĕркесе вырттартăмăр.—Рейнвальд сивĕ-и мĕн сана?—тесе ыйтатпăр. Вăл нимĕн те чĕнмест. Хăй витĕрех шăннăскер, пĕтĕм кĕлеткипе сиксе чĕтрет.

Пĕр сехете яхăн выртсан тин калаçма тытăнчĕ Рейнвальд.—Ой, шыв нумай ĕçсе тултарнă эпĕ. Виçĕ хутчен çăвара шыв кĕчĕ. Пурăнас килет вĕт, çав тери пурăнас ки-

лет!—тет. Унтан хӑй мӗн тӗрлӗ ишсе, мӗн-мӗн шухӑшласа пӗтни ҫинчен каласа пачӗ Рейнвальд.

— Килте ман пӗртен-пӗр ватӑ анне ҫеҫ. 64 ҫулта. Атте хам Хӗрлӗ ҫара килсен виҫӗ уйӑхранах вилсе выртнӑ... Анне халӗ эпӗ киле таврӑнасса кӗтсе пурӑнать. Ма пурӑнас мар-ха ман? Пурнӑҫ кунран-кун тенӗ пекех лайӑхланса, тӳрленсе пырать. Мӗн кирлӗ—пурте пур пирӗн. Мӗн тесе ҫак харсӑр шыв кулли пулас-ха ман?—тет.

Рейнвальд—1911 ҫулта ҫуралнӑ красноармеец. Комсомолец. Белорус. Гомель хулинчен. Хӗрлӗ Ҫара киличчен тӑватӑ ҫул шоферта ӗҫленӗ. Кӗнеке-хаҫат тесен, тем тӑрринчен сикет пулӗ. Кирлӗ-кирлӗ мар ыйтупа пули-пули сӑмах вакламасть, анчах пӗр тавлашма тӑрсан, хӗрсе кайса тавлашать вара, нихҫан та парӑнмасть. Рейнвальд—пысӑк кӗлеткеллӗ, ҫирӗп ал-ураллӑ, патмар ҫын. Черкке пек ялкӑшса тӑракан витӗр куҫлӑ, сап-сар сӑнпуҫлӑ йӗкӗт. Чи лайӑх физкультурник. Ҫӳҫне яланах кастарать. Ҫӑва тухсан, шывран тухма пӗлмест. Ӑмӑртса ишме тӑрсан—яланах чӑн малта. Анлӑ Амур уншӑн ним те мар. Ҫавӑнпа вӑл, тумтирпе пулин те, ҫирӗм минут хушши сивӗ шывра ишме пултарчӗ.

— Ну, командир юлташ, Рейнвальд ГТО нормин иккӗмӗш сыпӑкне ишессипе парса

татрĕ тесе çырăр ĕнтĕ... Пĕр ушкăн нимĕн чĕнмесĕр выртнă хыççăн лахлатса кулса ячĕ вăл.—Вилĕмрен çăлăнса юлтăм, халĕ ĕнтĕ шăп ватăличченех пурăнатăп—тет. Рейнвальда çăлма май килнĕшĕн пурте сăмахпа каласа пама май килмелле марах савăнтăмăр эпир.

Тепĕр сехет çурăран эпир хамăр утрав çумне çитсе чарăнтăмăр. Санпайран Рейнвальд валли çĕнĕ кĕпе-тумтир илсе килчĕç. Вăл тумланчĕ. Казармăна тавăрăннă тĕле каç тĕттĕмĕ сирĕлме пуçларĕ. Хура пĕлĕтсем таткаланса саланса пĕтрĕç. Тап-таса тӳпере çăлтăрсем çиççе, çутатса ячĕç. Пĕр çăлтăрĕ ярăнса вырăнтан вырăна ӳкрĕ. Рейнвальд сассипе кулса каларĕ:—Ан ӳк, çăлтăр, ан сӳнсем: çĕр çинче никам та вилмен, эпĕ те ырă сывах,—терĕ.—Ай-ай, асăнтарчĕ мĕн ку Вăтам юпă,—терĕ тахăшĕ хуллен кăна, Рейнвальд питех илтмелле мар... Çаплах та икĕ тĕнче хушшинче юхакан анлă Амур тăрăх ишмешкĕн пит аван.

1935.

## ЧИКĔ ТĂРĂХ

Батальон командирĕн помощникĕ капитан Хороших мана хăй патне чĕнсе илсе приказани пачĕ:

— Эсир Сталин районне каятăр. Хăвăрпа пĕрле пĕр красноармеец пултăр. Казначейран пин тенкĕ укçа илĕр тата. Лере çитсен мĕн-мĕн тумаллине акă çак хут тăрăх вуласа пĕлĕр.—Мана пĕр хут татăкĕ тыттарчĕ вăл.— Урăх калаçса тăма вăхăт çук: ман васкавлă ĕç пур. Ну, яра парăр!

Эпĕ, приказанине итлесе илсе, устав хушнă пек сылтăм алла тăнлав тĕлне тытса ответ патăм та, штабран тухрăм. Халиччен командировкăра пулса курман та, хушнă ĕçе тумаллах: Хĕрлĕ Çарта хăвăнтан аслăрах начальник панă приказани—татăклă ĕç; эсĕ ăна хапăл туса йышăнатăн та çине тăрсах тăватăн—çавăнта дисциплина. Ротăра е хăвăн взводăнта йĕрке лайăх тытасси чăн малтан хăвăнтан килет. Эсĕ хăвăнтан аслăрах начальниксене хисеплеме пĕлетĕн пулсан, хăв та хисепре вара. Кĕçĕн командирсемпе крас-

ноармеецсем яланах чăн малтан сан çине пăхаççĕ, сана сăнаççĕ, санран пример илеççĕ.

Хăвăрттăн кăна хатĕрленеттĕм, çав хушă-рах красноармеец-почтальон Кондаков çыру пырса тыттарчĕ.

— Варли çыру çырса янă сирĕн пата, командир юлташ, акă,—терĕ вăл.—Тунсăхлать пулĕ ĕнтĕ, „эх, кичемлĕн иртет ман çамрăк ĕмĕр", тесе пайтах кулянать пулĕ...

— Варлисем çинчен шухăшлама хăю çитерейменĕп, çамрăк вăхăт иртрĕ ĕнтĕ...—çапла тавăрма тиврĕ Кондакова хирĕç.

— Иртмелле-çке!—тет вăл татах.—Шăп хĕрсен пуçне пар-çавăрса ăшне çунтармалли вăхăт сирĕн! Анчах кунта, Амур варринчи çĕр татăкĕ çинче, хĕрупраç çукки пуçа касать... Ну, вулама чăрмантарас мар тата сире, сывă пулăр,—терĕ те Кондаков, тухса чупрĕ.

Вуласа тăма вăхăт çук, çырăва кăсъене персе чикрĕм те, чемодан йăтса, пристăне васкарăм. Манпа пĕрле—красноармеец, Ĕпхӳ тутарĕ, Сабиров юлташ.

Пароход çине çитсе ларма ĕлкĕртĕмĕр кăна—вăл тапранса та кайрĕ. Амур тăрăх тăвалла ише патăмăр.

Хай çырăва аса илсе йăпăр-япăр ватса вуларăм эпĕ. Çыру Илле Ефимович Тăхтирен. Хыпар: чăваш писателĕсем бригадăпа Казахстана экскурсине тухса кайнă...


ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

— Мĕн хыпар, командир юлташ? — терĕ Сабиров; вăл эпĕ хавасланса вуланине кура ыйтмасăр тӳсеймерĕ курăнать.

— Писательсем Казахстана курса çӳреме тухса кайнă ав...

— Апла эппин... Ну, эпир Амур тăрăх курса çӳрер-ха пĕрреххут. Пирĕн те лайăх экскурсиех пулать акă, каларĕ тейĕр...

Ача чухнех çĕршыв тăрăх курса çӳресшĕн çунаттăм эпĕ. Сибире те çитсе курасшăнччĕ, Кавказа та, Крыма та. Хамăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитсех пынăн туйăнать тата. Сибирьте икĕ çул пурăнма лекрĕ, Кавказра Хĕрлĕ Çарта пулса пĕр çулталăк ытларах иртрĕ; Крым тăрăх та кăштах курса çӳреме ĕлкĕртĕм. Халĕ тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче акă. Ку тăрăхра халиччен пулман та, майсăрах курса çӳрес килет манăн. Ахаль те ку çĕршыв „никама пăхăнман" Манчжоу-Го çĕршывĕпе кӳршĕллĕ те. Кӳршĕсем çинчен пĕлес килет тата. Çар çыннишĕн ку та паха япалах.

„Киров" пароход хăвăрт ишет. Вăхăт-вăхăтпа ăшăх вырăна пырса çитсе тăрна куçĕ пек тăп-тăрă шыва хăйăрпа хутăштарса хăварать.

Амур Атăл пек тикĕс тĕплĕ мар. Çавна пула кунта пароходсем час-часах хăйăр çине кĕре-кĕре лараççĕ.

Пыратпăр. Умра, инçех те мар, Манчжури парохочĕ курăнса кайрĕ, буксирла пароход. Пирĕн „Киров" ăна часах хăваласа çитрĕ. Танлашрăмăр. Фарватер тăрăх икĕ пароход юнашар пыраççĕ—икĕ тĕнче парохочĕсем. Пассажирсем палуба çине тухнă та пăхса тăраççĕ.

Манчжоу-Го парохочĕн капитанĕпе лоцманĕ иккĕшĕ те—вырăссем. Вĕсем иккĕшĕ те картузĕсене сăмса таран лап тăхăнса лартнă та, хăйсен кĕлеткисем тăрăххăн кăна умнелле пăхса лараççĕ. Пирĕн пароход еннелле пăхма темĕн чарать вĕсене, темĕн чăрмантарать. Хăюлăхне такам туртса илнĕ çавсенне? Пирĕн пароход çинче—пассажирсем, вĕсенни çинче çар хатĕрĕ: бронле автомашина, патрон ещĕкĕсем, хĕçпăшал... „Ан курăнтăр" тесе пулас, брезентпа витнĕ хăйсем „таварне". Салтакĕ пăшалпа хурал тăрать. Мĕн çинчен шухăшлать-ши çав салтак? Хăйне мĕскер тума тăратнине пĕлет-ши вăл?

Пароходсем тавлашса чупнă пек пыраççĕ. Ют пароходăн ют капитанĕ картузне хăпартмастех, лоцманĕ те çавах. „Эпир Япони империализĕсем валли хĕçпăшал турттаратпăрçке. Пирĕн ĕç—ирсĕр ĕç", тесе ӳпкелешмеççĕ-ши çавсем? Асту, каламалла-çке! Вĕсем вĕт—шургвардеецсем. Сăнчăрта тăракан йытă хăйĕн хуçи çине пăхса вĕрнине каламаççĕ.

Совет парохочĕ çине тăрă куçпа пăхма хăюлăх çитместех курăнать çавсен; çавăнпа вĕсем хăйсем тăрăх кăна пăхса пыраççĕ,

„Киров“ шыва хăюллăн касать. Вăл пĕррех сасă пачĕ те кўршĕсен пароходне хыçа хăварчĕ. Эпир иртсе кайсан тин хай ют капитанпа лоцман куçĕсене уçрĕç пулас. Вĕсем пуçĕсене каçăртрĕç, картузĕсене чип-чиперех пуçĕсем çине хăпартса лартрĕç. Вĕсем мĕн хăтланнине эпĕ ятарласах бинокль витĕр хам куçпа хам сăнарăм.

Пирĕн пароходăн лоцманĕ, Амур тăрăх пĕрвĕçрен çирĕм çичĕ çул ишнĕ ватă украинец—Петро Дуб, çав ют пароход çинчи шургвардеец-капитан çине пўрнипе тĕллерĕ те сасăсăр кулса каларĕ:

— Совет çыннисем çине куçран пăхма намăс пулать? Çапла пулмасăр! Раксем ăçта хĕл каçнине лайăх кăтартрăмăр эпир сире çирĕм иккĕмĕш çулта. Хўрĕрсене хĕссех тухса сирпĕнтĕр Совет çĕршывĕнчен, йытăсем!

Инçетри Хĕвелтухăçĕнче çулла час-часах çумăр çăвать. Çанталăк тĕтреллĕ тăрать. Кĕркунне апла мар—янкăр уяр. Сентябрь уйăхĕ пĕтсе килет пулин те, тўпере хĕвел кун-каçах ялтăртатать. Пĕлĕт тăп-тăрă. Хĕвел шевли шыв çинче вылять. Амур тăршшĕпех—утравсем. Вĕсем пирĕн пароходран

пĕрре сылтăмалла, тепре сулахаялла пăраннă пек туйăнса юлаççĕ. Утравсем çинче этем пĕвĕнчен çӳлĕрех ухлĕм-курăк çитĕнсе ларнă та, ухăнса утă çулакан çамрăк та паттăр каччăсемпе панулми пек чипер хĕрсен вичкĕн çависене кĕтсе илеймесĕрех сарăхса кайнă. Йĕри-тавра пăхса пыратăн та куллянса хăвна хăв калатăн: ай-ай, мĕн чухлĕ сĕткенлĕ курăк ахалех сая каять çакăнта. Пирĕн ялта эпĕ ача чухнех пĕр „Сынок" ятлă халап ăсти пурччĕ. Çирĕм улттăмĕш çулта вăл килне-çуртне сутса мĕн пур семьипех Сибире кайрĕ. Уйхапхинчен тухсан Сынок пичче ялйышсемпе уйăрлас умĕн пирĕн аннене алă парса ак çапла каларĕ:

— Ну, Праçук, эсĕ хăв ватă çын, хĕрарăм тата: санран инçе çула тухса çӳресси пулаймĕ,—анчах ачусене кала: Сибире пырса курччĕр вĕсем. Кунта пурăнма хĕн: пирĕн пек чухăнсен ани-çаранĕ кĕтĕк: ути-улăмĕ чей çине ярса ĕçмелĕх çук. А Сибирьте апла мар: унта—Саккам сакки сарлака...

Амур тăрăх пынă май Сынок пичче калани аса килчĕ мана. Кунта гектар пуçне пилĕкçĕршер пăт таран утă çулса илеççĕ. Çулма ĕлкĕрейменни çаплипех шурса каять; çулсеренех, çуркуннепе, вут тĕртсе çунтарайса яраççĕ ăна. Талккишĕпе хыпса илсе асса çунать вара çав курăк.

Амурӑн икӗ ҫыранӗпе хир винограчӗ ешӗрет. Ӑна татса пӗтерме никам та ал ҫитерейӗмӗ. Ай-ай, мӗн чухлӗ пурлӑх ҫакӑнта! Ятарласах ҫак винограда кунӗпеле тататтӑм. Виноград шывне юхтарса, сахӑр ярса йӳҫӗтсе Дон казакӗсем пек хӗрлӗ эрех тӑвӑттӑм; хӗрлӗ эрех тӑвӑттӑм та уява тухӑттӑм; уява тухӑттӑм та ҫӗн пичӗке пуҫлӑттӑм; колхоз ударникӗсене ырлӑх-сывлӑх сунӑттӑм та шалт куркине парӑттӑм.

Пур ҫине—пур: пӑхса пынӑ хушӑрах шывран пӗр-пӗр мӑнттай пулӑ чалт! сиксе тухать те, хӳрипе пӗррех ҫапса шыва ҫурса таҫта чӑмса пытанать. Курайса юл...

Кунӗн-ҫӗрӗн Амур урлӑ чикке пачах пӑхӑнмасӑр карти-картипе кайӑк-кӑвакалсемпе хур-кайӑксем Манчжури ҫӗрӗнчен пирӗн Кӗҫӗн Хинган тӑвӗсем еннелле вӗҫеҫҫӗ. Халапри пек мухтавлӑ кайӑкҫӑ та тытса пӗтереймӗ вӗсене. Амур икӗ енӗпе инҫетре-инҫетре ҫӳлӗ тусем курӑнса выртаҫҫӗ. Ку— Хинган тӑвӗсем. Кунта та, лере те мӗн чухлӗ ешӗл улӑх, мӗн чухлӗ ҫеҫенхир! Лере те, кунта та илемлӗ ҫавра кӳлӗсем ҫуталса выртаҫҫӗ.

— Пӑх-ха ӗнтӗ,—тет Сабиров,— мӗн чухлӗ ҫӗр! Такама та ҫитмелле вӗт ҫак аслӑ ҫӗршыв! Анчах Япония империализӗсем татах тӑранман. Ҫавтери аслӑ Манчжури ҫӗршывне

çавăрса илнĕ пулин те татах, татах ют çĕр-шыва куç хываççĕ çавсем. Малтан Манчжоу-Го турĕç, халĕ ав „Çурçĕр Китай-Го“ тăвас-шăн, унтан „Сибир-Го“, „Урал-Го“ тума хап-сăнаççĕ тет, тата...

Анчах Амурăн сулахай енче Хĕрлĕ Çар хуралта. Çавна пула „Го маçтăрĕсен“ ĕмĕ-чĕсем çултан çул шанчăксăра тухса пыраççĕ.

* * *

Сталинфельда çитсен эпир Сабиров юл-ташпа иксĕмĕр пароход çинчен анса юлтă-мăр. Вăхăт çурçĕр иртсе тăватă сехет çине кайнă. Тĕттĕм-ха. Тÿпере çăлтăрсем ялкă-шаççĕ. Амур хумханать. Харсăр хумсем айăпсăр çырана кăлăхах пыра-пыра çупаççĕ. Çанталăк сулхăн. Çурçĕр енчен çил вĕрет. Ку тăрăхра ман паллакан çын çук та, ниçта кайма пĕлместпĕр. Тул çутăласса кĕтсе çы-ранри пĕренесем çинче калаçкаласа вăхăт ирттерме лекрĕ. Вăхăчĕ ытла вăрахăн иртнĕ пек туйăнать тата. Калаçса ларнă хушăрах, кĕтмен çĕртенех, пирĕн пата пĕр этем кĕ-летки сывхарнине курах кайрăмăр.

— Мĕскер çĕрхута калаçса ларатăр çак эсир, кăнтăрла вăхăт çитмерĕ-и мĕн?—тесе юмах пуçарчĕ çак çын пирĕн пата çитсе тăрса.

— Вăхăчĕ-мĕнĕ, ниçта кайса ларма пĕлмерĕмĕр-ха. Паллакан çын çук та...—Кĕскен калаçса илнĕ хыççăн, çак çын хăй хваттерне кĕрсе ăшăнма сĕнчĕ пире.

— Эпĕ—пристань хуралçи: хушаматпа чĕнсен Пермин пулатăп,—терĕ вăл. Пермин—шур çӳçлĕ, шур сухаллă, çӳллĕ тата платна пӳ-силлĕ, хулăм саслă старик. Ку старик хăй ĕмĕрĕнче хурапа шурра нумай тӳснĕ, „улатимĕр хапхи" айĕнчен тухнă çын курăнать. Вăл „çиччĕ виç те пĕрре кас" тенĕ майлăн калаçать; унăн кашни сăмахĕ хăй выранче. Амур тăрăх каллĕ-маллĕ нумай çӳренĕ курăнать Пермин.

— Эпĕ—Амур казакĕ,—терĕ вăл.—Çакăнта çуралса ӳснĕ те, çакăнтах ĕмĕре ирттеретĕп ĕнтĕ. Атте ман Байкал лешъенчен килнĕскер пулнă. Иккĕмĕш Лександр патша куçарса килнĕ вĕсене. Амур таврашне сыхлама казаксем кирлĕ пулнă, тет пулас. Çавăнпа Байкал лешъенĕн казакĕсене Амур таврашне куçма хушса указ кăларнă та патша—кĕпĕртеттерсе килнĕ, урăх нимĕн те мар.

— Ку таврара çĕршыв аслă та сĕткенлĕ, казаксем вăйлă пурăннă пулĕ авалтанах?

— Как калас,—тет Пермин.—Кĕсел çыранлă сĕтлĕ шыв выраннех хунă тет Амура. Çапла шанчăкпа килнĕ те казаксем—кĕселлĕ çыран тĕлне пулайман, сĕтлĕ шыва куç

хӳрипе те курайман. Ҫапах пурӑнса кайнӑ вара...

Чӗлӗм чӗртсе ячӗ те старик, татах калаҫма тапратрӗ.

— Пӗртан пурӑрма май ҫукчӗ кивӗ саманра.—Казак сылтӑм аллине йӑтса Амур леш ъеннелле кӑтартрӗ:—Пӑх, ав, епле асап ҫавӑнта—мӗн пурӗ те пӗр километр инҫерех кӑна. Куратӑн: китаец-пулӑҫсем кунӗнҫӗрӗн ырми-канми пулӑ тытаҫҫӗ. Апла пулин те ҫийӗ-пуҫӗ ҫӗтӗк вӗсен, хырӑмӗ выҫӑ. А тепӗр ҫӗрулпучӗ е фабрик хуҫи ӗҫлемесӗр опиум туртса выртнипех ӗмӗрне иртterет. Вӑл тутӑ та, питӗ те. Ҫавнашкалахчӗ ҫакӑнта та...

Пермин старике итлесе Некрасов сӑвви аса килсе каять. Ӑшӑнта вулатӑн та эсӗ ҫак сӑвва, Манчжури еннелле пӑхса илетӗн... Ҫапла калаҫса ларнӑ вӑхӑтра шурӑмпуҫӗ кӑвакарса килчӗ. Автансем пӗрин хыҫҫӑн теприавӑтса ячӗҫ. Пӗр карта хуркайӑкӗ пӗлӗте янратса иртсе кайрӗ.

— Мускавра халӑх ҫывӑрма выртать пулӗ, кунта ӗҫе тухаҫҫӗ,—тесе хучӗ Сабиров, чылайччен ыйӑхласа ларнӑ хыҫҫӑн.

—Ӑҫтисем пулатӑр-ха эсир?—тет старик.

— Эпӗ Атӑл хӗрринчен, юлташ Ёпхӳрен,—терӗм эпӗ.

— Ҫак тӑрӑхра пӗр виҫ ҫул ӗлӗкрех халӑх

пит сайраччĕ, халĕ килсе тулчĕç. Пĕтĕм Совет Союзĕ ĕçлет çакăнта кучухне, пĕтĕм Совет Союзĕ хурал тăрать çак çĕршыва. Эх, çĕршывĕ те майсăрах пуян ĕнтĕ! Кунта хур сĕчĕ кăна çук, ытти пурте пур: ылттăн тăпри, çĕр кăмрăкĕ, тимĕр-тăмăр, вăрман, пулă, тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк... Çавăнпа пĕтĕм тĕнче пăхать Инçетри Хĕвелтухăçĕ çине. Пĕрисем куçхываççĕ, теприсем шăлĕсене шаккаççĕ...

Тул çутăлса çитсен, эпир Пермин старикпе алă тытса уйрăлтăмăр та, хамăр ĕçпе Сталинфельдран виçĕ çухрăмри Нагибово ялне тухса утрăмăр. Ку колхоз тулă кăна акса тăвать. Тата пулă майсăр нумай тытаççĕ ку колхозра. Кашни кунах пĕрер-икшер тонна таран пулă тытса сутаççĕ. Пуллăн килограмĕ пĕр тенкĕ.

Кунта ĕç пĕтсен, эпир Екатерино-Никольское ялне кайма тесе, пристăне пытăмăр.

Пристань начальникĕ каçалапа «Сергей Лазо» пароход килмелле тесе пĕлтерчĕ.

Пушă вăхăтра Сталинфельд совхозĕ тăрăх курса çÿрерĕмĕр эпир. «Фельд»—тесе еврейсем хире калаççĕ. Сталинфельд тени Сталин хирĕ тени пулать иккен. Чăнах та, ку вырăнта таса хир кăна пулнă. 1929 çулта, Китай шурбандисене «лăплантарнă» хыççăн, аслă хирте аслă совхоз пуçланать—Ста-

лин ячӗпе тӑракан, Сталин ятне тивӗçлӗ совхоз. Шӑп Совет Союзӗн чиккинче ларать çак совхоз. Кунта ӗçлекен рабочисем пӗтӗм çӗр чӑмӑрӗ çинчен пухӑннӑ. Кунта Польшӑран, Латвирен, Литваран, Эстонирен, Америкӑн пӗрлешӳллӗ Штачӗсенчен, Аргентинӑран килнӗ еврей рабочисем ӗçлеççӗ. Кунта ӗçлекенсем Мускавран, Киевран, Одессӑран, Ростовран, Хусантан, Минскран тата ытти вырӑнсенчен те килнӗ. Кунта вырӑссем, еврейсем, тутарсем, ирçесем, чӑвашсем, казахсем, белоруссем, украинецсем, молдавансем, китаецсем, кореецсем ӗçлеççӗ.

Еврейсен Автономлӑ Облӑçӗнче çӗршыв çавтери пуян. Тулӑ, хӗвелçаврӑнӑш, рис, соя, чумиза, судза, ыраш, сӗлӗ, урпа тата ытти тырӑсем те акса тӑваççӗ çакӑнта. Ку çӗршывра тырӑ-пулӑ çӗлен шуса тухайми çӑра пулать. Сталин ячӗпе тӑракан совхоз та юмахри пек хӑвӑрттӑн ӳсет. Вӑл виç-тӑватӑ çул хушшинче хула пулса тӑнӑ. Тӗттӗм çӗрсенче совхоз электричество çуттипе ялкӑшса ларать. Çав çутӑ Амур шывӗ çине те ӳкет. Манчжури çыннисем текех сӑнаççӗ çакна. Вӗсем пӗрмай Совет Союзӗ еннелле пӑхаççӗ. Чикӗ лешъенчен тарса тухса пирӗн çӗршыва килекенсем те сахал мар.

Кӑнтӑрла тепӗр хут пристӑне пытӑмӑр эпир. Пермин старике татах тӗл пултӑмӑр.

— Ну, ачасем, парохода ан кётĕр,—«Сергей Лазо» Сунгари тĕлĕнче хăйĕр çине кĕрсе ларнă,—терĕ вăл.

Мĕн тăвас? Совхозра ĕçлекен Гольдман шоферпе калаçса татăлса çула майлă каякан машина çине ларатпăр та, Екатерино-Никольское еннелле вĕçтере паратпăр.

Сталинфельдран 15 километр хĕвеланăçнерех Благословенная ятлă корей ялĕ пур. Ку ял çинчен мана хамăр батальонри пулăçă, Амур казакĕ, типшĕм пит-куçлă, кăвак-сухаллă, кăвак та сайра çӳçлĕ, лутра, хыткан пӳ-силлĕ, сăмахлама юрататакан ăшă кăмăллă çын, Иван Петрович Пьянников каласа парсаччĕ.

— Ĕлĕкренпех опи сутса пурăннă вăл ял; унта ялĕпех мăкăнь акатчĕç революциччен,— тесеччĕ Иван Петрович.

Опиума «опи» теççĕ те ку тăрăхра, Пьянников та çаплах калать. Благословенная ялне тахçанах çитсе курасшăнччĕ эпĕ. Çавăнпа, майĕ килсе тухнăскер, кăштах курас-пĕлес тесех, çак ялта икĕ-виçĕ кунлăха чарăнтăмăр.

* * *

Благословенная ялне пырса кĕнĕ чухне халиччен тĕл пулман япала куратăн эсĕ. Ял йĕри-тавра тăмран çапса çӳллĕ хӳме хӳсе çаврăннă.

— Ак япала, Китай аслă хӳми кунта тă пур-çке!—тесе ячĕ Сабиров çакна кура.

Яла кĕтĕмĕр. Урамра та, килкартисенче те, пахчасенче те йăранĕ-йăранĕпе кукуруз кашласа ларать. Вăл, типсе шурнăскер, кăштах çил вĕрнипех чаштăртатать. Кукуруз йăранĕсем хушшипе китай купăсти (салат), çĕрулми, пăрăç, нимĕч пăрçи, кавăн тата ытти тĕрлĕрен çимĕç те пахча туллиех.

Корееццем пурте пахча-çимĕç акса тума ăста çынсем. Вĕсем ĕçе питĕ тĕплĕн тăваççĕ. Пирĕн тăрăхра час-часах «пахча ĕçĕ—хĕрарăм ĕçĕ вăл» тенине илтме пулать. Корейцсем апла каламаççĕ. Вĕсен хĕрарăмĕ-арçынĕ—пурте пĕрле пахчана ирпе тухаççĕ те, кукленсе ларса шăп каçченех тирпейлĕн ĕçлеççĕ.

Çĕрулмине кĕреçепе мар, катмакпа чавса кăлараççĕ çакăнта. Шап-шуррăн тумланнă халăх пахчара ĕçлет. Эпир кăна урам тăрăх иртсе пыратпăр. Пĕр 10—12 çулхи хĕрача витре тулли шыв йăтрĕ те, пуçĕ çине лартса уттара пачĕ.

— Халь персе анать çакăн витри!—чухлаймасăр персе ятăм эпĕ. Анчах ман калашле пулмарĕ: хĕрача циркри актер пек утнă майăн выляса çеç пырать. Урисене йăкăр-йăкăр ярса пусать хăй, аллисене кĕрнеклĕ хĕрарăм манерлĕ сулкалать. Шывĕ тăкăнас яхăнне те пымасть хăйĕн.

Корей хěрарăмěсем темěнле йывăр япалана та пуç тăрринче лартса йăтаççě. Пěр-икě пăтлă тулли михěсене вара тӳрех пуçě çине лартса утгара параççě. Ал вěççěн çав йывăрлăха ниепле те йăтаяс çук вěсем. Пуçпа йывăрлăх йăтассине пěчěкренех хăнăхаççě кунта. Кун пирки пěр хěрарăмпа ак çакнашкал калаçсаттăмăр эпир:

— Йывăр мар-и сире çапла пуçпа япала йăтма?

— Йывăр мар.

— Пуç ыратмасть-и?

— Ыратмасть.

Халиччен ку тăрăхра пулман çыншăн çěнě япала татах нумай çакăнта. Акă пěр хěрарăм урампа пире хирěç вăкăр çавăтса пырать. Хăй кăкăр ачине тутăрпа çурăм хыçне пăчăртаса çыхса лартнă. Сабиров ыйтрě çакăнтан:

— Инке, капла эсě ачуна асап кăтартса вěлеретěн вěт. Мěншěн апла йăтатăн?

— Ничево,— терě те корейка, çултан супса, пирěн çине пăхса тăрса юлчě.

Ачасене çурăм хыçěнче йăтса çӳрес йăлана колхозницăсем пăрахнăпа пěрех ěнтě. Çавах хăшě-пěрисем паян кун та хăнăхнă йăлана пуçěпех пăрахăça кăларайман-ха.

Кореецсен пӳрчě-çурчěсене урам тăрăх йěркипе мар, тěлсěр, йěркесěр лартса тух-

нă: пĕрин пÿрчĕ çул хĕрринче, теприн—пахча варринче, йăрансем хушшинче тенĕ пек ларать.

Урам тăрăх йĕри-тавра пăхкаласа пырса сисмесĕрех ялсовечĕ тĕлне çитсе те тăнă эпир.

Канцеляринче ялсовет председателĕ Цой, секретарĕ Ким тата парти райкомĕн инструкторĕ Ла-Ен лараççĕ.

— Мĕнле пурнаççĕ Совет влаçĕн пуçлăхĕсем? Сире чăрмантарма килтĕмĕр. Ĕç вăхăтĕнче ял тăрăх кумса çÿреççĕ тесе ан ятласамăр...

— Екатерино-Никольское ялне хамăр ĕçпе каяттăмăр та, çул майĕ сирĕн пата кĕрсе тухас килчĕ...

Ла-Енпа калаçса лартăмăр пĕр ушкăн.

Ăшă кăмăлпа йышăнчĕç пире çак ялти ĕçлĕ çынсем. Вĕсем кунта, ялсоветне, касхине çеç таврăнаççĕ мĕн, кăнтăрла пурте колхоз хирĕнче, бригадăсенче.

Паллашса çитсен Ла-Енпа чылайччен калаçрăмăр. Вăл хăй пурнăçĕ çинчен те каласа пачĕ.

— 1905 çулта Корея çĕршывĕнче пурнăç çав тери хĕсĕнсе çитрĕ. Çултан-çул йывăрлансах пычĕ тата. Налог татма ниепле те вăй çитерейместатте. Ене пурччĕ—«парăмшăн» тесе çавăтса тухса кайрĕç. Йĕре тă-

ратпăр эпир, сĕтсĕр тăрса юлнă вĕт-шакăр. Анне выçăллă-тутăллă пурăннипе хĕне кайса вилчĕ. Эпир вунпĕрĕн кĕпĕртетсе тăлăха юлтăмăр. «Пуяна—мул, чухăна—ача-пăча» тенĕ. Ача-пăчаран пуян пулнă пирĕн аттеанне.

Вунултă çула çитсен ялтан тухса Российăна тартăм. Çаппа-çарамасăн, çара пуçăн, çара уран хам. Российăра мана кĕтсе тăракансем пур пекех туйăнчĕ. Ăçта çуран, ăçта çула майлă лавпа, ăçта вагон картлашки çинче тăрса пытăм..

Виçĕ эрнерен Владивостока персе çитрĕм. Шутлатăп: ну, ĕнтĕ, Российăрах пурăнса ирттеретĕп ĕмĕре.

Эрне çӳретĕп хула тăрăх ĕç шыраса, икĕ эрне çӳретĕп—ĕç çук. Российăра мана никам та кĕтмен иккен. Аран-аран пĕр кореец-купец патне хĕрлĕ тавар магазинне вырнаçрăм. Шутлатăп: ну, ĕнтĕ пурнăп-ха хăть!

Анчах купец-купецах çав, хăть кореец пултăр вăл, хăть китаец, хăть вырăс. Хĕвел тухсан ĕçе тытăнатăп та çурçĕрпе тин пăрахатăп. Çулталăк ĕçлерĕм çапла. Ĕçлетĕп те шуратăп. Пуç ыратать. Эпĕ, вунçичĕ çулхи каччă, чĕпкуç чирпе аптăрарăм тата. А хуçа ĕçукçине алла памасть. Хăй патĕнче кухньăра выртса-тăрса пурăнаттăм та, хваттерпе апатшăн тесе çех ĕçлеттĕм...

Ла-Ен чӗпкуҫне асӑнать те, эпӗ хам та асилтӗм ҫавна. 1914 ҫулта аттене салтака илсе кайрӗҫ. Анне тата сакӑр ача шӑкӑртатса юлтӑмӑр эпир. Пӗр кӗсре, пӗр тына тата тӑват-пилӗк сурӑх пурччӗ пирӗн. Тына таппратса тултарнӑччӗ, пӑруласа парасси нумай та юлманччӗ. Ҫав тынана кӗсре хӑратнӑ та лешӗ тарса хӑтӑлма пикенсе пулас, ҫара ҫуна ҫине пырса кӗрсе малти сылтӑм урине шатӑртах хуҫса пӑрахнӑ. Сӗтсӗр тӑрса юлтӑмӑр ҫав ҫулхине. Тепӗр ҫулхине качака туянтӑмӑр вара, хамӑр ялти лекҫей Павӑлчсен хура качакине. Ҫав качака, кашни кунах икшер е виҫшер стакан сӗт паратчӗ. Сума тесе пӳрте кӗртнӗ качакана тӳрех сырса илеттӗмӗр эпир виҫҫӗн-тӑваттӑн. Сырса илеттӗмӗр те аннене калаттӑмӑр:

— Анне, тӳттӳ. . Анне, сӗт...—Анне ҫилленсе ятласа тӑкатчӗ вара.

— Чул муклашки мар-и! Пӗр качака сӗчӗпе пӳрт тулли ача-пӑчана тӑрантарма ҫӑмӑл тетӗр-и эсир? Ха, ачашланса кайрӗҫ ӗнтӗ: сӗт те сӗт! Пуҫа парах ҫавӑраҫҫӗ. Ӑҫта-ха, ҫӑпата кантри?

«Ҫӑпата кантри» тесен эпир тӳрех кӑмака хыҫне сирпӗнтереттӗмӗр. Атте тӑватӑ ҫултан тин вӑрҫӑран таврӑнчӗ. Анчах вӑл килте икӗ ҫул ытларах кӑна пурӑнчӗ. Ҫирӗм пӗрремӗш ҫулта ҫанталӑк ҫӑвӗпех уяр

тăчĕ. Çăматă туса тырă ĕçлесе тупма тесе Сибире тухса кайрĕ те атте—пĕр сас-чӳсĕр çухалчĕ вара. Хăраххăн тăрса юлнă анне йĕре-йĕре ак çапла калатчĕ:

— Турă чăнахах пур пулсан мĕншĕн килсе пăхмасть-ши çакăнта? Пӳрт тулли ачапăча ашшĕсĕр тăрса юлчĕç те выçăхса лараççĕ. Пĕреххутчен мĕншĕн вилĕм памасть-ши турă...

Шăп çав качака туяннă çул чĕпкуçĕ пуçлансаччĕ манăн. Каç пуласпа тула тухма çукчĕ вара: сан умна е лаша, е пĕр-пĕр çăмкайăк майлă кĕлетке тухса тăнă пек курăнса каятчĕ. Ахаль те хĕрт-суртран хăранăскер, чун сиксех тухатчĕ пуль çавна пула. Çапла чĕпкуçĕпе йăлт вунсакăр çула çитиччен шăпах асаплантăм. Больницăна та кайкаланă. Тухтăрсем «апат лайăхрах çимелле те уçă сывлăшра ытларах çӳремелле» тесе ялан пĕрмайлă канаш паратчĕç. Эпĕ тухтăрсен канашне шута илсе сывлăшра нумай çӳреттĕм те, çăкăр çине тăвар сапса суханпа çыртса çиеттĕм. Майсăр тутлăччĕ çав апат, чĕре патнех пыратчĕ.

Ла-Ен та манашкалах çинĕ пуль çав. Вăл калатъ:

— Шутларăм эпĕ çак купец патĕнчен тухса урăх çĕре куçма. Пăрахрăм та—пулă тытакансем патне кайрăм—пулă тытма.

Вырнаçрăм. Шутлатăп: ну, ĕнтĕ пурăнма пулĕ-ха хăть! Аслă та Лăпкă океан çинче пурнăç та ирĕк пулассăн туйăнчĕ. Анчах йăнăшрăм. Кунта та хĕсĕк лекрĕ мана. Ĕçлетĕп те шухăшлатăп: вот-тăк Россия? Мĕн тăвас?.. Миçе хутчен калана пулĕ эпĕ çак «мĕн тăваса»?

Пăрахрăм та тартăм çакăнтан. Хĕвеланăçнелле çул тытрăм. Пермь хулине кайса лекрĕм. Чусовоя çитетĕп. Ĕçе кĕрес тесе çӳреттĕмччĕ, ниçта та вырнаçаймастăп тата. Пасара тухрăм. Ĕçе илекенсем пасара тухатчĕç те... Пăхатăп та—ман документсене кĕсъерен бритвăпа касса кăларса илнĕ... Полици тытăмне кĕрсе евит тăвас тесе шутлаттăмччĕ çеç, пĕр шандарĕ мана кĕпе çаннинчен ярса тытрĕ те çавăтса кайрĕ. Полици тытăмĕнче мана сивĕ пӳлĕме хупса хучĕç. Тӳсме çук сивĕ. Аран-аран çĕр каçрăм. Тепĕр кунне начальник патне çавăтса тухрĕç... «Мĕскерле этем эсĕ?» тет начальник. «Çапла сынах-çке»,—тетĕп,—«чип-чипер çынах». «Çак документсем санăн мар-и?»—тет. «Манăн», тетĕп. «Тĕрмене хупас пулать сана çавăншăн», тет начальник. «Хупăр,—тетĕп эпĕ.—Унта апат çитереççĕ пулĕ вĕт?»—Начальник çилленсе çитрĕ.

— Эсĕ ĕçлемесĕр апат çисе выртасшăн-иха, путсĕрскер!—терĕ те, документсене ала-

ран тыттарса алăк уçрĕ те хыçран тапса кăларса ячĕ.

Чусовоя вăрман касма кайрăм. Çав çулхине вара вăрман витĕр пирĕн пата витĕмлĕ те хулăм сас çитрĕ: „Революция!"

Çав çулхине салтака илчĕç мана. „За веру, за царя и за отечество" служить тума тесех илчĕç. Анчах патша çарĕ чăлпăр кăна салан-са кайрĕ. Унтан граждан вăрçи пуçланса кай-рĕ, фронт. Эпĕ хĕрлисем патне лекрĕм.

Сибирьтен Колчак хĕсет çав вăхăтра. Эпир вĕсене хирĕç малаллах пыратпăр. Тю-меньрен Омска çитрĕмĕр, Новониколаевска, Красноярска... А халăх тăкăнать—вĕçĕ-хĕрри çук. Выçăпа тăкăнать халăх, сивĕпе тата тăш-ман хĕççипе. Асаплă пулчĕ çав вăхăт. Çав асап витĕр Владивостока çитрĕм эпĕ те. Çирĕм иккĕмĕш çулта партине кĕтĕм. Вăл вăхăтра Колчак пуçне çухатрĕ, Семенов утаман чикĕ лешъенне тарса пытанчĕ, чехсемпе Японин интервенчĕсен йĕрри те юлмарĕ. Совет Ин-çет Хĕвелтухăçĕ тинех ирĕккĕн сывласа ячĕ. Эпĕ унтанпа Совет ĕçĕнче те, парти ĕçĕнче те ĕçленĕ. Ĕçлетĕп, анчах пĕлӳ çитмест. Эпĕ ниçта та вĕренсе курман вĕт. Парта хушшинче мĕнле лармаллине те лайăххăн чухлайман. Çавăнпа мана вĕренме хушрĕç. Парти крайкомĕ Коммунистла аслă шкула ячĕ. Виçĕ çула яхăн вĕрентĕм. Пĕтерсе ту-

хасси инçех те марччĕ—крайком татах ĕç хушрĕ. Татах ĕçе ячĕç—колхозсене çирĕплетме. Колхозсем ытах тĕрексĕрччĕ çак тăрăхра. Тĕттĕм вăйсем тĕлĕрмеççĕ. Ют çĕршывран хăват илсе тăма пикенекен тăшмансем пайтахчĕ кунта.—Ун çинчен сире калама кирлĕ мар-ха хăть, эсир хăвăр Совет чиккин хуралçисем-ха. Яланах асра тытмалла: тăшман инçе мар... Калатăп-çке, колхозсем пит тĕрексĕрччĕ çак тăрăхра виç-тăватă çул ĕлĕкрех. Ура çине тăратмаллаччĕ вĕсене, Сталин хушнă пек большевикла колхозсем тумаллаччĕ. Çавна кура мана вĕренме пăрахтарсах ĕçе ячĕ крайком. Халĕ ав парти райкомĕн инçтурткторĕнче ĕçлетĕп.

Ĕç нумай кунта. Çын çитмест, çав пуçа касать. Рис ытларах акмалла. Ăна валли юрăхлă çĕр кирлĕ. Çĕре рис акса тума юрăхлă тăвас тесен, пайтах канав алтмалла.—Татах çын кирлĕ. Çак Инçетри Хĕвелтухăç Крайне Российăран паянах виçĕ миллион çын куçарса килĕттĕм! Вĕсенчен пĕр пилĕк пинне тӳрех хамăр колхозсене вырнаçтарăттăм! Ав, „Октябрь“ колхозра рис сакăрвунă гектар акнă. Çитес çул çĕрхĕрĕх гектар акмалла. Ун валли тăватă километр тăрăшшĕ канав алтмалла. (Рис пăтти тутлă, анчах чăрмавĕ пысăк унăн). Çак канава алтнăшăн тӳлеме тесе ятарласах çĕр центнер рис уйăрса хунă, тата

райçĕрпайĕ çичĕ пин тенкĕ укçан парать,— çапах никам та кĕрĕшекен çук, çын çитмест. Ытти колхозсен хăйсен ĕç нумай, „Ворошилов“ колхозĕ те, çĕрĕн-кунĕн ĕçлет пулин те, ĕçлесе ĕлкĕреймест, татах ĕç нумай-ха. Тара тытса ĕçлеттерессине шанса пулмасть-ха...

Эпир калаçса ларнă хушăра ялсовет председателĕ пирĕн валли хваттер шыраса та тупнă мĕн.

— Сирĕн кăштах канас килет пуль? Айтăр хваттере каяр,—терĕ Цой.

* * *

Хваттере пит лайăх çынсем патне лекрĕмĕр. Килхуçин хушамачĕ Чен, корейла ячĕ— Таири, ашшĕ ячĕ—Поцой. Кунсăр пуçне вырăсла ят пур Ченăн, шыва кӳртсе, кĕлтуса ирĕксĕр панă ячĕ: Семен Осипович Чен.

Семен Осипович 68 çулхи кăвак çӳçлĕ, кăвак сухаллă, лутра та курпунтарах старик. Пăхма ӳтсĕр пулин те вăйлă çак çын, вăйлă та ĕçчен. Вăл пĕр минут та ахаль лармасть, пĕрмаях мĕн те пулин ĕçлет.

Эпир хăй патне пырса кĕнĕ чухне Семен Осипович судза вăрри сăвăрса тăратчĕ. Судза вăл—çуллă вăрă, шăпкан вăрри майлах. Кореецсем судза çуне пиtĕ юратса çиеççĕ.

— Ĕçĕ ăнăçлă пултăр, хуçи.

— Ничево, спасибо,—терĕ старик.—Инçетрисем-и?

— Пит инçетрисемех мар.

— Апла эппин...

Старик ларчĕ. Пире те ларса канма сĕнчĕ.

— Семен Осипович,—терĕ Цой,—акă çак пăшаллă çынсен хваттер çук, вĕсене сан патна вырнаçтарас терĕм эпĕ, хирĕç мар пуль вĕт эсĕ?

— Юрать,—кĕскен килĕшрĕ Чен.—Ман хамăн та ывăл Хĕрлĕ Çарта.

Пĕр тапхăр чĕнмесĕр ларнă хыççăн татах ыйтрĕ килхуçи.

— Мĕн ĕçпе çӳретĕр-ха?

— Курмалла тенĕ пек çеç...

— Апла эппин. Пĕр курассишĕн çеç мар пулĕ те ĕнтĕ? Эсир ахаль каламастăр. Сирĕн вĕт служба çавнашкал,—тавăрчĕ вăл.

Тĕплĕнрех каласа пама лекрĕ вара.

Таири, Поцой вăрăм чăпăклă чĕлĕмне ĕмеĕме пуçне тайса ман сăмаха илтнĕ пулчĕ.

— Юрать, юрать. Купăсти те кирлĕ, ытти те кирлĕ.

Çапла пăртакçă калаçса ларсан эпĕ Семен Осиповича Благословенная ялĕ çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.

— Юрĕ,—килĕшрĕ Чен.—Калаçса пăхăпăр акă. Эпĕ колхоз клубне хураллама каятăп. Унта пырса лар—çĕрĕпех калаçăпăр...

Хуҫа арӑмӗ пире апат ҫиме йыхӑрчӗ. Пӳрте кӗтӗмӗр.

Апата урайне ларса ҫиеҫҫӗ кореецсем. Пӗр шит ҫӳллӗшӗ лутра сӗтел тавра урисене хӑйсен айне туса тутарла ларса ҫаврӑнаҫҫӗ вара ҫемьипех. Пӗрремӗш блюда яланах — рис пӑтти, иккӗмӗш блюда — салат. Кашӑк вырӑнне — икӗ патак. Патакӗсене хытӑ шӑмӑллӑ курӑкран тӑваҫҫӗ.

Апата тӑварсӑр пӗҫереҫҫӗ кореецсем. Эпир, тӑварсӑр апат ҫиме хӑнӑхманскерсем, ҫинӗҫименех тухрӑмӑр сӗтел хушшинчен.

— Ма сахал ҫиетӗр? — тет хуҫа.

— Тӑварсӑр апат ҫиме хӑнӑхман эпир, — таврӑрчӗ Сабиров.

Хуҫа кулса ячӗ.

— Пирӗн тӑвар ямаҫҫӗ апла, — терӗ вӑл.

Пиҫнӗ-пиҫмен икӗ хут тӑрантать, теҫҫӗ. Ҫакнашкалах пулчӗ пирӗн...

Апат хыҫҫӑн эпӗ ялсоветне кайса килтӗм. Киле таврӑннӑ тӗле пирӗн валли вырӑн сарса хунӑ хуҫасем. Сабиров хӗрсе ҫывӑрать. Каҫ пулса килчӗ. Кун-каҫа ура ҫинче ҫӳренӗрен пулас, самаях ӗшентӗм хам та. Кӑштах канма тесе выртнӑскер ыйӑха яра панӑ. Семен Осипович патне кайса ларас тенӗччӗ те — пулмарӗ... Ир вӑраннӑ кайӑк тутӑ пулнӑ тенӗ пек, каннӑ хыҫҫӑн, хӑшпӗр шухӑшсене ҫырса

хурас тесе, ирех тăрса пӳрт умне тухса лартăм эпĕ.

Кореецсен килкартийĕ яланах тап-таса. Ăна вĕсем кулленех шăпăрпа шăлсах тăраççĕ.

Пӳрчĕсем урлă майăн урамалла пăхаççĕ. Пӳрт тăррисене хăмăшпа витеççĕ. Тулашĕнче, хăрах стени çумĕнче пӳрт тăрринчен кăшт çӳлерех тăватă кĕтеслĕ йывăç труба кăнтарса тăрать. Çав труба мĕскер иккенне ыйтса пĕлме тăрсан, хуçа мана кӳршĕсен пӳрчĕ çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Пăх, ав тĕтĕм тухать...

Пӳрте кĕрсен куртăм вара. Кореецсем пӳрте çурмаран уйăраççĕ. Пĕр пайĕн урайне тĕпсакайлă, тепĕр çурма пӳртĕн урайне тăмпа çапса тăваççĕ. Ку пӳрт варринче—вучах. Вучахра сарлака та ăшăх тĕплĕ хуран ларать. апат хуранĕ. Тăмран çапса тунă урай айĕнче арлан йăвине ертсе кăякан çулсем майлă шăтăксем туса пĕтернĕ. Вучахри тĕтĕм çав шăтăксем тăрăх кукăрăлса пĕтĕм урай айĕпе çӳрет те, хай асăннă тăватă кĕтеслĕ трубаран тухать. Урайĕ çавăнпа ăшă, кореецсен пӳртĕнче çара уран çӳресен те ӳслĕке ерĕп тесси çук.

Кореецсем пӳрте икĕ пая уйăраççĕ терĕмĕр. Пĕр пайне „вырăс пӳрчĕ“ теççĕ вĕсем, теприне—корей пӳрчĕ. Вырăсла пӳртре урайĕ те хăмаран, сĕтелĕ те пур, пуканĕсем те,

ҫăкăр кăмаки те. Корей пӳртне татах икĕ пая уйăраççĕ. Пĕр пайĕ—хĕр пӳлĕмĕ, тепри ун патне хăтана пынă ҫынсене йышăнмалли. Кореецсем пӳрт лартнă чух ятарласах хĕр валли уйрăм пӳлĕм тăваççĕ. Хĕрача пĕчĕкренех ҫав пӳлĕмре пурăнать. Ашшĕ-амăшĕн темиҫе хĕр пулсан вăл пӳлĕме малтан аслă хĕрĕ йышăнать, кĕҫĕннисем аппăшĕ ҫичĕ-юта тухасса кĕтсе пурăнаççĕ.

Ҫитĕннĕ хĕр хăйĕн упăшки пулас каччăпа нихăҫан та калаҫмасть; вăл унпа тĕл пуласран яланах пăрăнать. Мăшăрланас каччă та, хăйĕн пулас арăмне курма мар, хăтана та хăй каймасть: вăл хĕр ҫураҫма ашшĕ-амăшне е тăванĕсене ҫеç яма пултарать. Йăли ҫапла. Ҫапли-мĕнĕ, ку йăла ĕлĕк ҫеç ҫапла пулнă, халь пăрахăҫа тухнăпа пĕрех ĕнтĕ.

Кореецсен пӳрчĕ маччасăр. Стропилăсем урлă тăвату кĕтеслĕ вăрăм каштасем хунă та вĕсем ҫинчен хăмăш витнĕ. Хăмăшне пит илемлĕ, тăп-тăп, ҫăт-ҫăт та тĕрĕ тĕрленĕ пек илемлетсе витеççĕ.

„Вырăсла пӳртре“ пукансем пур пулин те, хуҫасем, корейла пӳртре урайĕнче лараççĕ. Апат ҫиет-и кореец, чĕлĕм туртать-и, е канать,—вăл яланах урайĕнче урисене хăй айне туса ларать.

Урайне „каласун“ ятлă курăкран ҫыхса тунă ковер сараççĕ. Кирек ăҫтан таврăнса

пӳрте кӗрсен, кореецсем калушне, е пуставран ҫӗлесе тунӑ туфлисене алӑк патне хывса хӑварса тӗпелелле чӑлха вӗҫҫӗн иртеҫҫӗ.

* * *

Благословенная ялӗ 1870 ҫулта пуҫланнӑ. Вӑл ҫулхине Корея ҫӗршывӗнче калама ҫук вӑйлӑ выҫлӑх пулнӑ. Выҫӑпа вилесрен халӑх ялӗ-ялӗпе ӑҫта кирлӗ унталла саланса кайнӑ. Нумайӑшӗ хӗвеланӑҫнелле ҫул тытнӑ.

Сунгари тӑрӑх аналталла йывӑҫ кимӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ишнӗ ҫав ҫулхине. Сунгарирен Амура ӳкнӗ кимӗсем шыв тӑрӑх аналла та тӑвалла та саланнӑ.

Иккӗмӗш Александр патша закон хыҫҫӑн закон кӑларма юратнӑ теҫҫӗ. Вӑл Амур таврашне ҫавӑрса илсе Россия ҫумне ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, ҫак ҫӗнҫӗре пурӑнма куҫса лаpакан кореецсем пирки ҫапла указ кӑларнӑ: „Кореецсене Амур таврашне ҫӗр парас, анчах вырӑс тӗнне пӑхӑнтарас".

Амур таврашӗнче этем пырса кӗми сӗмвӑрман хӑрушла кашласа ларнӑ ҫав вӑхӑтра. Унта пуртӑ сасси янраман, ҫӗр ҫулхи юмансене пӑчкӑ пырса хускатман. Сӗм-вӑрманта тигрсем тата ытти тӗрлӗ тискер кайӑксем ҫеҫ пуҫпулса пурӑннӑ. Таҫта-таҫта, вӑрман уҫланкинче анчах пӗр-пӗр пӗчӗк ял тӗл пулнӑ хутран-ситрен.

Хай асӑннӑ Александр патша указӗ тӑрӑхах Байкал лешъенӗн казакӗсем килсе пуҫарса янӑ ку ялсене. Эх, хӑямат, эпир татах Пермин старик каласа пани патне таврӑнтӑмӑр-ҫке!

Патша хӑйӗн тытӑмне кӗрекен ҫӗршыври кашни халӑхах пӗр турра пуҫҫаптарса, пӗр чӗлхепе калаҫтарассишӗн ҫине тӑрсах тертленнӗ теҫҫӗ. Вӑл хӑйӗн шухӑшне пурнӑҫа кӳртсех пынӑ тата.

Ҫӗнӗ ҫӗре куҫса килнӗ корееццем лайӑххӑн вырнаҫма та ӗлкӗреймен, вӗсене патшан вырӑнти чиновникӗсем „кӑтарту" панӑ: „акӑ сирӗн валли чиркӳ".

Унтан пӗтӗм халӑха сурӑх кӗтӗвӗ хисепне хурса Амур хӗррине хӑваласа аннӑ та, арҫынӗ-хӗрарӑмӗ—пурне те пӗр харӑс шыва кӳртсе тӑратса пилленӗ:

— Паянтан эсир вырӑс тӗнне йышӑнатӑр. Аминь!..

Кун хыҫҫӑн пӗтӗм халӑха чиркӳве хӑваласа кӗрсе тепӗр „ӗҫ" хушнӑ:

— Кӗлтӑвӑр! Эсир вӗт—тӗне кӗнӗ халӑх!—Ҫакӑнтан ирӗксӗрех вырӑсла ят парса тухнӑ вара корееццене, кашнинех ҫӗнӗ ят: Иван, Петӗр, Ҫтаппан, Кавӗрле, Йӑкӑнат, Макар, Мӗкӗте, Трапхин, Уҫӑп... Ман хваттер хуҫи ашшӗ Поцой ятлӑ пулнӑ. Ӑна ватӑлмалӑх кунӗнче Уҫӑп туса хунӑ. Ирӗксӗр панӑ ҫак

ята. Çавăнпа Поцой хăйне мăшкăласа пусмăрлакан чиновниксемпе пупсене ак çапла асилсе тăнă пулать:

„Асту, Уçăп, çапса хуçăп".

„Çĕнĕ халăх" пуçарса янă ялăн ятне те „Благословенная" тенĕ.

Кореецсем çак мăшкăла хирĕç кĕрешнĕ. Вĕсем ют тĕне нумайччен килĕштермен, чиркĕве кĕлле çӳремен. Çавăншăн вĕсене урядниксем пайтах саламатпа çаптарнă, „йĕрке кӳретпĕр" тенĕ пуль ĕнтĕ.

Кореецсем вырăсла чиркӳне вăрттăн вут тĕртсе çунтарса яраççĕ. Анчах ку та пулăшман: чиркӳ вырăнне чиркӳ туса та лартнă. Чиркӳве вут тĕртекен çынна нумайччен шыранă, анчах тупайман. Пурна-киле чиновниксем халăха пĕр саламатпа çапса хĕненипе май тухас çукне те тавçăрса илнĕ, тет. Çавăнпа вырăс пупĕ вырăнне корей пупне тупса пыраççĕ яла. Çĕнĕ пуп тăван халăхне хăйсен чĕлхипе лăпкă пурăнма вĕрентет:

— Вăйлисен сăмахĕнчен ан тух. Тайлан пуçа хĕç витмен...

Чиркӳ çителĕксĕр пулнă иккен: халăх ют чĕлхепе кĕлтуманиепле те хăнăхман. Çавăнпа шкул лартса панă вара, унта ятарласах кĕлтума вĕрентнĕ. Шкул та çителĕксĕр туйăннă. Эрех лавки лартса панă хайхискер.

Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Китайра опи-

ум акса тума пăрахтармалли закон тухнă. Российăра апла закон кăларса чăрманакан пулман тата вăл вăхăтра.

Опиум ҫинчен мана Иван Петрович Пьянников уйрăмах ак ҫапла каласа парсаччĕ.

— Лахасусу хулинче китай купцисем стена ҫумне таянса ларăҫҫĕ те вара, вăрăм чăпăклă ăшăх чĕлĕмпе опи туртса ларнă хушăрах пуҫран ҫапнă пек минкĕленсе йăвана-йăвана каяҫҫĕ... Лахасусу хули Сунгари шывĕ Амура юхса тухнă тĕлте ларать. Ĕлĕк Амур казакĕсем ҫавăнта кашни пасарах ҫӳренĕ. Опиум сутса пурҫăн пир-авăр туяннă унта. Опиум вăл—мăкăнь сĕткенĕ. Чечеке ларнă мăкăнĕн пуҫне ҫĕҫĕпе тăрăххăн касса чĕреҫҫĕ те, ҫав ҫурăкран шурă сĕткен тухать. Сĕткене пĕр-пĕр савăт ҫине пуҫтарса типĕтеҫҫĕ те—опиум хатĕр пулать вара.

Китайра, Корея ра опиума табак вырăнне туртаҫҫĕ. Пĕрре ăша ярса ĕмсен—ăнтăхтарать ҫав япала. Апла пулин те китаецсем вăйлă туртаҫҫĕ опиума. Опиум ҫав тери хаклă япала. Туртасса та ăна пуян ҫынсем кăна туртаҫҫĕ, чухăн-чахăн илме вăй ҫитерейместь.

Китайра опиум акма пăрахтарнă хыҫҫăн, китаецсем ăна туянма Российăна ҫӳреме тапратнă. Укҫа шеллемен уншăн. Ҫакна сиссе Амур таврашĕнче пурăнакансем мăкăнь акас

ĕçе пит хăвăрт хăнăхса çитнĕ. Благословенная сыннисем те „хакла лартнă“. Вĕсем çулсерен чикĕ лешъенне пайтах опиум сутнă. Урпа та, тулă та, рис та, соя та, çĕрулми те, кукуруз та—нимĕнле тырă та опиум чухлĕ тупăш парайман. Десятинран вуникĕ кĕренке таран опиум туса илнĕ. Кĕренкине аллăшар тенке сутнă. Пайтах укçа вĕт.

Опиум чăрмавсăр пулмасть. Чечеке ларнă мăкăнĕн кашни пуçне ал витĕр кăларас пулать. Тăват-пилĕк десятина таран мăкăнь акрăн пулсан—пуçтарса кĕме пайтах çын кирлĕ. Апла пулсан, „йӳнĕ ал“ шырамалла пулнă. Пуян сынсем лайăхрах çĕрсене çавăрса илнĕ те чухăннисене тара тытса ĕçлеттерме тытăннă.—Çĕнĕ ял çапла тӳрех улапитленсе те каять. Пĕри тара тытать, тепри тара кĕрĕшет. Пĕри ĕçлеттерет, тепри ĕçлет. Пĕри пуять, тепри çукка юлать. Пĕри—хуçа, тепри—чура, вĕсенĕн нихăçан та пăрçи пиçеймен.

Благословеннаяри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пĕр ватă колхозник пур, 70 çулхи колхозник—Ли-Ченсири. „Ватă каччă“ тесе хисеплеççĕ ăна ялĕнче. Ли-Ченсири 55 çул тарçăра пурăннă. Авалхи йăлапа тарçăра пурăнакан кореец авланма пултарайман. Авланас тесен те ăна пыракан хĕрĕ те пулайман пулĕ тата. Пирĕн вăхăтра Ли-Ченсири вунçичĕ çулхи каччăсемпе ăмăртса ĕçлет.

Эрех, опиум, тӗн сӗрӗмӗ, пусмăр, мăшкăл— акă мӗн пулнă çакăнта. Çакна пула 45 процент таран туберкулезпа чирленӗ Благословенная çыннисем. Асаплăн çуралнă, асаплă пурăннă, асап курсах вилнӗ. Ялйышӗ çулран çул чаксах пынă. Такам вӗрентнипе тата чиртен хăтăлас тесе, йытă какайӗ çиме хăнăхнă çакăнта. Пусаççӗ те йытта, хисепе хурсах пӗçерсе çиеççӗ.

* * *

Ворошилов ячӗпе тăракан колхоз председателӗ Михаил Арсеньевич Пак пире хăй колхозӗпе тӗплӗн паллаштарчӗ. Колхоз пуçланнăранпа çак ялăн ятне маннăпа пӗрех: „Ворошилов“ теççӗ кăна, колхоз ячӗпе. Эпир Пак юлташпа пӗрле кун-каçах бригадăсем тăрăх çӳрерӗмӗр. Колхоз рис вырать, çӗрулми кăларать. Кунта ыраш, тулă, сӗлӗ тата пăрçа-ясмăксăр пуçне пирӗн тăрăхра акса туман тырăсем акаççӗ: рис, соя, судза, кукуруз...

Михаил Арсеньевич вăтăр пилӗк çулхи вăйпитти çын. Кӗлеткинчен пăхсан, хыткан хăй, анчах пит праварскер вара. Чӗлхи-çăварӗ çивчӗ, сăмах-юмахӗ татăклă, утти паттăр унăн. Пуçӗнче студентла кепка, çийӗнче красноармеецла гимнастерка, галифе-шăлавар, уринче—джим-атă. Хăйне мăнна хывма юрат-

масть çак çын. Хыттăн кăшкăрса калаçмасть. Пĕр-пĕр çынна ятламалла пулсан, вăл шӳт туса намăслантарать, култарать. Пухусенче вăхăта вăрăма тăсмасть. Пăхсах паллă—ку çын хăй выранĕнче. Ĕçе хисепе хурать. Çавăнпа вăл хăй те хисепре. Çавăнпа вăл колхоз председателĕнче виçĕ çул ĕçлет. Михаил Арсеньевич ĕçлеме пуçланăранпа колхоз пĕлмелле марах улшăннă. Кашни колхознике, кашни бригадира, кашни конюха витĕр пĕлсе тăрать Пак. Ĕç вăхăтĕнче ыйăх курмасть вăл. Кăнтăрла председатель хирте, каçпа—правленире.

Иртнĕ çулхине „Ворошилов" колхозăн государствăна вунă пин пăт тырă сутмалла пулнă. Пак колхозĕ вунвиçĕ пин пăт кайса сутнă та автомашина туяннă. Кăçал тепĕр машина илме ĕмĕтленет Михаил Арсеньевич.

— Аттесем тырă сутма Хабаровска каятчĕç вара,—тет Пак.—Çирĕм пăт сĕлĕ тиесе каятчĕç те çул çинче çуррине лашине çитерсе яратчĕç. Икĕ эрнерен каялла таврăнатчĕç. Халĕ тавлăкра ĕç туса килетпĕр... А арăмĕ йĕкĕлтет Пака:

— Хабаровска кунĕ кайса кунĕ килетĕн, киле çул майĕ те кĕрсе тухмастăн. Пĕрмай чупать, пĕрмай чупать. Вот килхуçи!

— Эсĕ шанчăклă хĕрарăм иккенне пĕле-

тĕп эпĕ, çавăнпа кĕместĕп, сана тĕрĕслемес-тĕп, ăнлан,—шўт турĕ Михаил Арсеньевич.

Паян ав кунĕпе ĕçлесе ĕшеннĕ председатель каçа хирĕç Сталинфельда, совхоз директорĕ патне кайса килме шутланă.

— Вăхăт пур пулсан, айтăр пĕрле кайса килер,—терĕ Пак мана.

Тепĕр самантран вăл кабинăна кĕрсе шофер вырăнне ларчĕ те мана хăйпе юнашар ларма сĕнчĕ.

— Шофер айвантарах-ха, ытла шанчăксăр çўрет, хăйĕн ĕçне ниепле те вĕренсе çитейместь. Васкавлăрах чухне хам çўретĕп вара,—терĕ Пак, баранкăна хăнăхнă аллисемпе хăюллăн çавăркаласа. Машина улшуç аллинчи лаша майлах пит чипер пырать.

Уй хапхинчен тухнă чухне хай ял йĕри тавра хўсе çаврăннă тăм хўме çинчен ыйтрăм эпĕ.

— Сыхлăх хўми вăл,—терĕ Пак.

— Камран сыхлатăр çак тăм хўме?

— Хунхузсенчен сыхланма тесе тунă ăна хăй вăхăтĕнче...

Пак мана çак хўме историне кĕскен каласа пачĕ те хушрĕ:

— Эпĕ пĕлейменнине тулли мар вăтам шкул преподавателĕ Тимофей Ом каласа парĕ, унпа каласса пăхăр-ха...

Калана пекех, Сталинфельдран таврансан эпир, Сабиров юлташпа иксёмёр, хай учитель патне кайса каласса лартамар.

Тимофей Ом—чёлхепе литература учителё. Калаçна чухне вал шухашёсене йёркелесе пама аста.

Благословенная ялён йёри-тавра тамран хусе çаваранна хуме çинчен те каласа пачё Тимофей Федорович.

— Пирён ялан историйё самай пуян,—тесе пуçларё вал.—Пирён яла 1920—21 çулсенче чикё леш енчен хунхузсем килсе икё хутчен сатар турёç.

Пёрремёш хут ёç çирёмёш çулта декабрён 11-мёш кунёнче пулса иртрё. Чикё лешъенчи Сакар Балаган ятла китай ялё енчен тёттём çёрле хунхузсем килсе яла тул çуталас умён хупарласа илчёç те, пёр çынна тухса тарма ирёк памасар, пусмарласа машкалама тапратрёç.

Пётём вайпитти арçынсене ялёпе тыта-тыта тухса пёр пёчёк пурте хупса хучёç. Унтан кашни хайсене мён япала кирлё çавна йатса тухса лавсем çине тиесе лартрёç. Опиум, укçа-тенкё, кёрёк-тумтир, ата-пушмак, тыра-пула, çёлемелли машина, самовар... Кёскен каласан: хайсене мён кирлён туйанна—çавна йалт илсе тухрёç.

Унтан лашасене кӳлсе тăратрĕç те,—ĕнесене пăявпа йăлласа çавăтса тухса кайрĕç.

Хунхузсен отрячĕ майсăр йышлă пулнă: 240 çын юланутпа, 400 çын çуран—мĕн пурĕ 640 хунхуз.

Çав вăхăтра пирĕн ялта пĕр эскадрон хĕрлĕ утлă çар тăратчĕ,—Мунгалов эскадронĕ. Хунхузсем килсе кĕрес умĕн пĕр виç кун маларах кăна шуррисемпе çапăçса Мунгалов эскадронĕнче мĕн пурĕ те тăхăр çын çеç тăрса юлнă. Апла пулин те Мунгалов яла çавăрса илекен хунхузсене хирĕç çапăçма тухать. Анчах пĕр отделени ултă çĕр çынлă отряда хирĕç мĕнех тăвайатăр? Мунгалов аран-аран ялтан тарса тухса хăтăлма ĕлкĕрнĕ.

Çав тери асрĕç вара хунхузсем ирĕке сисСе. Вĕсем ялта пилĕк талăк пурăнчĕç. Пилĕк талăк хушшинче пĕр пӳрте хупса лартнă арçынсене тĕпренчĕк çăкăр памасăр, пĕр тумлам шыв ĕçтермесĕр пăчăхтарса асап кăтартрĕç. Ватти-вĕттисене „опиум тупса парăр" тесе çапса хĕнерĕç. Хĕрарăмсене мăшкăласа йĕркесĕрлерĕç.

Хунхузсем кашниех хĕçпăшаллăччĕ. Вĕсен çумĕнче вырăс, нимĕç, япони винтовкисем пурччĕ. Кашниех пиçиххирен пĕрер-икшер граната çакса янă. Кашнинех кĕске кĕпçеллĕ хĕçпăшал: маузер, наган е пистолет. Çав хĕçпăшала вĕсене Калмыков шурбандит ту-

янтарнӑ пулнӑ. Вӑл ҫулхине Калмыков хӑйӗн банди-мӗнӗпех Хӗрлӗ Ҫар хӗснине тӳсейменсӗр Михаило-Семеновск ялӗ тӗлӗнче Амур урлӑ каҫса ют патшалӑха тарса хӑтӑлнӑччӗ вӗт.

Пӗр пилӗк талӑкран, хунхузсене ҫапса ҫӗмӗрме тесе, Екатерино-Никольскран пӗр эскадрон утлӑ ҫар килсе ҫитрӗ. Хунхузсем Хӗрлӗ Ҫар килнине туйса, тиесе лартнӑ пурлӑха васкавлӑн турттарса тухса чикӗ лешъенне ӑсатма ӗлкӗрчӗҫ; ӑна каялла ҫавӑрасси пулмарӗ...

Ҫапла хунхузсем ялтан ҫӗр лаша, темиҫе теҫетке ӗне ҫавӑтса, темиҫе ҫӗр пӑт тырӑ тиесе, темӗн чухлӗ укҫа-тенкӗ, темиҫе пӑт опиум, темӗн чухлӗ ҫипуҫ-тумтир ҫаратса тухса кайса, ялӗпе ҫаппа-ҫарамас та выҫӑ тӑратса хӑварчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Благословенная халӑхӗ ял йӗри-тавра ҫӳлӗ хӳме хӳсе ҫавӑрма шутларӗ. Ӗҫлеме таҫтан килнӗ китаецсене тара тытрӗҫ. Ҫав тара кӗрӗшсе ӗҫлекенсенчен нумайӗшӗ—хай яла ҫаратнӑ хунхузсемех пулнӑ иккен. Ӗҫленӗ вӑхӑтра ялта кам мӗнле пурӑннипе, камӑн мӗн-мӗн пуррине лайӑх сӑнанӑ хайхискерсем...

Ҫапла, икӗ уйӑх хушшинче китаецсем ял йӗри-тавра пилӗк ҫухрӑм тӑршшӗ хӳмене туса пӗтерчӗҫ Хӳмен ҫӳлӗшӗ икӗ метр ҫурӑ, хулӑмӗшӗ ҫур метр. „Ӗҫӗ амак—укҫи пул-

тăр" тесе, юриех ача вăййи выляна пекех ĕçленĕ çав хӳмене тăвакансем. Çулталăкранах хӳме çумăрпа исленсе вырăн-вырăнпа ишĕле-ишĕле аннă. Çапах хакне лайăх сăптăрса кайнă хӳмешĕн: 37 пăт опиум...

Яла ăçтан кĕрсе ăçтан тухмаллине тĕплĕн пăхса кайнă та хунхузсем ĕçленĕ хушăра, тепĕр çулхине татах килсе тапăнчĕç. Ял йĕри-тавра тăратса тухнă хуралçăсем хунхузсем килессине сиссе яла чупса кĕрсе халăха вăратнă: пĕтĕм ял лаша кӳлсе кам ăçта куç курнă çавăнта тарса пĕтнĕ. Тухса тарма ĕлкĕрейменнисем килĕсенчех ларса юлнă. Çапла хунхузсем татах тепĕр виçĕ талăк туй турĕç ялта. Анчах тухса тарма ĕлкĕрнĕ çынсем хĕрлисене вăхăтра систернĕ. Хĕрлисем вăл вăхăтра Столбовая ятлă ялта тăнă пулнă. Вĕсем пирĕн пата çитсе хунхузсене хупăрласа хăшпĕр япаласене каялла туртса илме ĕлкĕрчĕç.

Вăл вăхăтра красноармеецсем чылайăшĕ çара уран çапăçатчĕç. Эх, хальхи пек пуластăк! Халĕ Совет чикки урлă каçасси çăнăх алипе шыв йăтассинчен те йывăртарах. Ав, 1934 çулта леш енчен вуникĕ хунхуз юланутпа килсе совхоза çаратма тăнă. Чикĕçĕсем вĕсенчен вуннăшне чĕрĕллех ярса тытнă; иккĕшĕ, каялла тарса хăтăлма пикеннĕ те— иккĕшне те персе антарнă. Парăнман тăщ-

мана тĕппипех пĕтереççĕ—Горький каланă çакна... Чикĕре пуранатпăр пулин те шикленме аса та илместпĕр ĕнтĕ.—Çапла вĕçлерĕ Ом юлташ хăйĕн калавне.

Çурçĕр иртсе икĕ сехетрен эпир Тимофей Федоровича калаçушăн тав туса тухрăмăр.

— Ыран шкула пырса курăр-ха,—терĕ Ом.—Пирĕн шкул çултан-çул ӳссех пырать. Вăй парсах ĕçлес килет шкулта ку чухне!

Çанталăк янкăр уяр тăрать. Çап-çутă уйăхлă каç. Кĕрхи сулхăн çил кахаллăн вĕрет. Йăран çинчи шурса кайнă кукуруз туни ерипен чаштăртатать. Аслă Совет Союзĕн Хĕвелтухăç чиккинчи ял ыйăха кайнă, колхозлă ялăн ĕçлĕ халăхĕ хĕрсе çывăрать. Колхоз амбарĕн улăх пек аслă пӳлĕмне туллиех тырă тултарнă. Пирĕн хваттер хуçи—çав тырра хурал тăрать.

— Хунхузсем килсе çаратасран сыхлатăн-и мĕн ку тырра, Семен Осипович?—ыйтрĕ Сабиров старикрен.

Чен шанчăклăн ответлерĕ ăна хирĕç.

— Хунхузсем текех килес çук: халь застава пур.

Каланă пекех, тепĕр кунне шкула та çитрĕмĕр. Сабиров юлташ ĕлĕк Пушкăрт республикинче районĕн çутпай инспекторĕ пулса ĕçленĕ иккен. Шкул тесен вăл халĕ те шартах сикет, майсăрах хĕпĕртет.

Шкул ачисем пире куçĕсемпе чип-чиперех «çиеççĕ». Темскер ыйтса пĕлесшĕн пек пăхаççĕ хăйсем.

Шкул директорĕ Хван, Коммунистла аслă шкултан вĕренсе тухнăскер, учительсемпе учитель пек, ачасем хушшинче—ача. Вăл пире хăй шкулĕнче ачасем мĕнле пурăнни çинчен каласа парать те калать:

— Эпĕ хам ача чух çак ачасен пурăнăçĕ çинчен каласа паракана ĕненес çукчĕ пуль, «юмах ку» тенĕ пулăттăм.

Пĕр пӳлĕмре пионерсем юрă юрлаççĕ. Вĕсем вечера хатĕрленеççĕ иккен. Хĕрлĕ галстуклă, сывлăхлă, паттăр та савăнăçлă ачасем кăмăллăн пăхаççĕ. Вырăсла каласма сахал чухлаççĕ хăйсем; хăшĕ-пĕрисем пачах пĕлмеççĕ тата. Эпир хăйсем патне пырса кĕрсенех юрă руководителĕ, вăлах комсомол организаторĕ, кăштах çухалса кайнă пек ниçталла мар пулса тăчĕ. Хăй ăшĕнче: «Ку пистолетлă этем мĕн тума килчĕ-ши» терĕ тем вăл мана курса.

Алла тăнлав тĕлне тытса «Сывă-и, юлташсем?» тенине хирĕç пионерсем ура çине тăрса хăюллăн ответ пачĕç.

Пĕр пĕчĕкçеç пионер вожатый еннелле пăхса корей чĕлхипе темскер ыйтрĕ. Лешĕ ăна алай турĕ.

— Красноармеецсен юррине юрласа па-

расшăн вĕсем сире,—ăнлантарса пачĕ мана Хван.

— Аван, аван. Айтăр-ха, юрласа илер эппин,—хавасланса кайрĕ вожатый та.

Вăтăр икĕ ача, Октябрь ачисем, илемлĕ те хастарлă сасăпа юрă шăрантарма тытăнчĕç.

Если завтра война,
Если завтра в поход,
Если темная сила нагрянет,—
Как один человек—
Весь советский народ
За свободную родину встанет..:

Корейла та, вырăсла та юрласа пачĕç ачасем. Çак юрă, пирĕн красноармеецсем стройпа пырса юрланă чух, Амур урлă каçса Манчжури сопкисем тăрăх янраса каять. Манчжури партизанĕсем те итлеççĕ ăна, Япони салтакĕсем те...

Шкултан тухсан колхоз правленине пытăмăр. Унта Амурзет МТС-ĕн директорĕ Фоменко килнĕ иккен. Вăл пире хăй машинипе Екатерино-Никольска илсе çитерме пулчĕ те, эпир унпа пĕрле ларса кайрăмăр.

— Каялла таврăннă чух кĕрсе тухăр,—терĕ пире Михаил Арсеньевич Пак.

* * *

Екатерино-Никольское—ку тăрăхри чи пысăк станицăсенчен пĕри. Станица шăп Амур хĕрринчех ларать. Амурăн тепĕр çыранĕнче, Манчжури çĕрĕнче, çич-сакăр фанзăллă (пӳртлĕ) пĕчĕкçеççĕ ял пур. Вăл ялта ĕлĕкрех Китай хресченĕсем пурăннă, халĕ Япони салтакĕсем тăраççĕ; хресченсене тыла, чикĕрен инçене куçарнă. Халиччен чип-чипер пурăннă хресченсем 1931 çулта «шанчăксăра тухнă». Çав ялта кунĕн-çĕрĕн Япони çар йыттисем сиксе вĕреççĕ, пăру пек пысăк йытăсем.

Екатерино-Никольское станици сăртлă вырăнта ларать. Ку ялтан Хинган тăвĕсем те, Еврейсен автономлă облаçĕн пуян çеçенхирĕсем те талккишпех курăнаççĕ. Çак аслă ялта ĕлĕк Амур казакĕсем кăна пурăннă. Халĕ Российăран та, ют патшалăхсенчен те çемьи-çемьипе еврей ĕççынниссем куçса килеççĕ. Екатерино-Никольскри Сталин ячĕпе тăракан колхозра казаксемпе еврейсем пĕр çемье пулса, килĕштерсе ĕçлеççĕ. Амур казакĕсем çĕн самана пуçланиччен хăйсен ялне пырса пытанма никама та ирĕк паман, теççĕ. Казаксем талккишпе сарăлса выртакан сĕткенлĕ çĕршывпа хăйсем çеç усă курма юратнă, теççĕ. Суя çав сăмах. Екатерино-Никольскра çич-сакăр çĕрме-пуян пурăннă. Лапка та

сĕткенлĕ ана-çарансем çавсен аллинче пулнă. Çавсем сăрăхтарнă çĕршыв сĕткенне. Анчах вăтăрмĕш çулсенче вĕсен шăпи тулать. Чухăнсемпе вăтамсем колхоза кĕреççĕ те кулаксене «çын пулма» ăсатаççĕ.

Станицăна çитсен, яланхи пекех, чăн малтан ялсоветне пытăмăр. Ялсовет председателĕ пире хваттере пĕр хăраххăн хĕрарăм патне вырнаçтарчĕ.

— Пӳрчĕ аслă, çемьи йышсăр—çывăхра ун пек майлă хваттер урăх çук,—терĕ вăл.

Анчах хăй пурăнса курас пулсан çапла каламĕччĕ çак председатель.

Пирĕн хваттер майрин хушамачĕ Лопатина, ялта ăна «Лопатиха» тесе чĕнеççĕ.

Амур казакĕсен хĕрарăмĕсем пурте тенĕ пекех арçынсемпе танах табак туртаççĕ. Анчах çапах та Лопатиха пек вĕçĕ-хĕррисĕр туртакан çуках пуль хăямата. Лопатиха кăнтăрла та кун-каçах туртать, çывăрма выртас умĕн те, тата çĕрле ыйăхран вăранса та пĕрикшер хут мăкăрлантарать. Чĕлĕм тĕтĕмĕ ӳпке-пĕвере кĕрсе питĕрет, шăрши сăмсана çурать. Эпĕ вăл чĕлĕм туртма тытăнсан, хĕрсе çывăрнă хушăрах ыйхăран вăранса каяттăм; пӳртрен тухса тарас патнех çитеттĕм хăш чухне.

Лопатиха шыва путакан çынна пулăшу парас çук, вăл сивĕ куçĕпе пăхайса иртсе кай-

малла. Çапла пулма пултарассине эпĕ хам куç-па хам куртăм. Пĕрре çакнашкал ĕç пулса иртрĕ. Ман хваттер хуçи аппăшĕн ывăлĕ Королев Мишша Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Мишшана ăсатма тесе çап-çамрăк арăмĕ—Лена—килнĕ. Вĕсем Лопатиха патĕнче пароход килессе кĕтсе виçĕ кун пурăнчĕç. Çамрăк çынсем пĕр-пĕрне çав тери юратнă курăнать. Лена Мишшана пит йĕркеллĕ ăсатса ячĕ.

— Асту, Мишша,— терĕ вăл.—Эсĕ таврăннă тĕле пирĕн е ывăл, е хĕрача çўреме пуçламалла. Тепĕр çичĕ уйăхран иккĕн пулатăп эпĕ... Çыру çырсах тăр. Маншăн ан кулян. Хушнă ĕçсене йĕркеллĕ туса пыр. Хĕрлĕ Çарта та колхозри пекех хастарлă пул. «Сан çине шанмалăх пур. Асту, пирĕн шанчăка ан çухат»—ав мĕн каларĕç сана колхозниксем. Асра тыт çакна. Эсĕ вĕт—комсомолец. Ну, сывă пул!

— Сывă пул!—çакна каларĕ те Мишша, Ленăна ыталаса чуптуса илчĕ... Унтан, пароход çине кĕрсе кайма тăнăскер, каялла чупса тухрĕ Мишша.

— Асту, Лена, йывăр ан ĕçле. Эсĕ арçынсемпе пĕртан ĕçлеме юрататăн. Сыхлан. Йывăр япаласем ан йăт. Ну...

Тепĕр пĕр-икĕ минутран пароход тапранса та кайрĕ. Икĕ çамрăк вăхăтлăха уйрăлчĕç.

Шупашкартан Инçетри Хĕвелтухăçне мана

хама та ҫавнашкалах ӑсатса ярсаччӗҫ хамӑн ҫывӑх ҫынсем. Ҫавна аса илтӗм те эпӗ, шухӑш тӑхӑр пин километрти ҫуралнӑ ҫӗршыва вӗҫрӗ. Иртнӗ кунсем аса килчӗҫ. Ай-яй самолетпах вӗҫсе кайса пӗр сехет те пулин Шупашкарта пурӑнайса килӗттӗм! Анчах ӗҫ пур-ҫке кунта—Совет чиккине сыхлас ӗҫ. Ку ӗҫ кашнинех кирлӗ, ку ӗҫ нимӗнрен те ответлӑрах.

Хваттере таврӑнса выртсан вилнӗ пек ҫывӑрса кайнӑ эпӗ. Ыйӑх витӗр хӑлхана йынӑшнӑ сасӑ кӗрет. Ку—Лена сасси иккен. Вӑл тапхӑр-тапхӑр йынӑшать те Лопатихӑна калать:

— Инке, тӳсме ҫук вар ыратать,—тет. Инкӗшӗ, Лена каланине итлесе пӗтермесӗрех, ответ парать:

— Ыратнине курман-ха эсӗ. Апла мар вӑйлӑ ыратать те—ҫапах тӳсеҫҫӗ...

Выртсан-выртсан Лена татах йынӑшма тытӑнать. Йынӑшать те калать:

— Инке, ытлах ыратать-ҫке. Мӗн тумалла-ши?

Лопатиха ҫилленсе ятлать ҫавӑншӑн.

— Ытла ачаш эсир, ку чухнехи ҫамрӑксем. Ман тӑван аппа виҫӗ хутчен хырӑм пӑрахрӗ те ҫапах тӳсетчӗ, никама та чӑрмантармастчӗ!

Лена кровать ҫинчен сиксе тӑрса урайне ӳкет. Унтан ҫарамас, ҫарапуҫӑн, ҫарауран тула тухса каять. Тулта ҫанталӑк урать. Кӗрхи

сив çумăр çуни стена витĕр илтĕнет. Тепĕр темĕн чухлĕ вăхăтран Лена пӳрте кĕрет те урайне йăванса кайса пĕчĕк ача пек шарилетсе çухăрма тытăнать.

Лопатиха вырăн çинче чĕлĕм туртса ларать. Ленăна пулăшу парас вырăнне ятласа тăкать вăл:

—Эсĕ ман киле килсе йăванмасăр вырăн тупаймарăн-и? Ой, ачашланса выртать кунта! «Кам килсе йăпатасса шанса çухăратăн эсĕ? Тухса кайнă пултăр ман килтен. Марш!..

Чун чăтмарĕ. Сиксе тăрса хăвăрт тумлантăм та чăлантан Лена патне тухрăм.

Çав вăхăтра Екатерино Никольскра вар чирĕ çӳрет, тетчĕç.

Ленăна больницăна леçсе яма колхозран лаша кайса илес пулать. А каçĕ мăшкăланă пекех, çав тери тĕттĕм. Йĕп чиксе куç курмасть. Çумăр пĕр вĕççĕр пĕрĕхет. Харсăр çил кашлать.

— Командир юлташ, мана тархасшăн часрах больницăна кайса леçĕрччĕ, ахальрен вилетĕп эпĕ çакăнтах,—йĕре-йĕре çапла каларĕ мана Лена.

Лопатиха пукан çине тăрса ларнă та, хăй тĕллĕн мăкăртатса ларать.

— Вилместĕн... Улталатăн эсĕ «вилеп» тесе.

Çав тери çиленессĕм килчĕ-çке чунсăр Ло-

патиха çине. Урама чупса тухрăм. Урампа пĕр пушă лав пырать. Тӳррех чартăм лавçа.

— Юлташ,—терĕм,—эсир ăçта каятăр?

— Виççĕмĕш бригадăна...

— Колхозник-и?

— Колхозник-çке...

— Юрать... Сире чăрмав тăвам-ха эпĕ: акă çак пӳртре чирлĕ çын вилес пек выртать, ăна часрах больницăна кайса леçмелле... Хăвăртрах лашуна парăр-ха мана. Пăркаланса ан тăрăр—часрах тухтăр патне илсе çитермелле чирлĕ çынна. Ытти çинчен кайран калаçса татăлăпăр...

Колхозник килĕшрĕ. Лашана çавăрса килкартине кӳртрĕм те, Сабиров юлташпа иксĕмĕр Ленăна урапа çине лартса хăвăртрах тухтăр патневаскарăмăр.

Больницăра дежурнăй сестра кăна. Тухтăра ыйхăран вăратсах йăхăрса тухрăмăр хваттерĕнчен. Вăл, Ленăна палатăна вырнаçтарма хушрĕ те, манран ыйтрĕ:

— Ку сирĕн мăшăру пулать-и мĕн?

— Красноармеец арăмĕ. Упăшкине каçа хирĕç кăна Хĕрлĕ Çара ăсатса ятăмăр...

— Йăмăку пулать пуль эппин?—татах ыйтать тухтăр.

— Йăмăк та мар, хваттер хуçисен тăванĕ,— красноармеец арăмĕ.

— А-а-а,—терĕ тухтăр ăнланнă пек пулса.—

Эпĕ мăшăрăр пуль тесеччĕ. Çĕр хута больницăна леçсе тертленетĕр те...

Каялла хваттере таврăннă тĕле çумăр чарăнчĕ. Çил лăпланчĕ. Тул çутăлчĕ. Ленăна выртма çемçерех пултăр тесе, больницăна ăсатнă чух урапа çине икĕ минтер хурса парсаттăмăр та эпир Лопатиха çавăншăн пит çиленнĕ мĕн. Эпир çитсе пӳрте кĕрсенех вăл хăй тĕллĕн калаçса илчĕ:

— Минтерсене пылчăкласа килчĕç...

«Хăв лайăх пул—çынсем пурте пит аван» теççĕ. Çӳренĕ çĕрте чылай çынсемпе тĕл пулма тивет, никампа та хирĕçме аса та илмен. Анчах Лопатихăна юраймарăмăр эпир. Çавăнпа çав кунах тепĕр хваттере куçрăмăр—Иван Степанович Вавулин патне. Йăлтах тĕлĕнтерчĕ пире çак Лопатиха. Тĕнчере çирĕмултă çул пурăнса та çакнашкалах чунсăр этем курманччĕ. Вилес пек йывăр çын çине çаврăнса та пăхмасăр иртсе кайни нимĕнрен тискер ĕç вăл. Тепĕр темиçе кунран эпир Сабиров юлташпа иксĕмĕр Ленăна урамра тĕлех пултăмăр. Вăл катанпир пек шурса кайнă, больницăран анчах тухнă иккен.

Екатерино-Никольскра вар чирĕ çӳрет тенипе, Лена та çав чирпех сывмар пуль тесеччĕ эпĕ малтан. Анчах урăх сăлтав пулнă. Хăйне больницăна леçнĕ чухне çул майĕ каласа пачĕ Лена:

— Калама аванах мар та, çапах тĕрĕсси-пех калам,—терĕ вăл, — эпĕ çитĕнмен ача çуратрăм кĕçĕр, хырăм пăрахрăм...

Лопатиха çавăн çинчен малтанах пĕлнĕ иккен. «Вилместĕн. Ытла ачаш-ха эсĕ»— унăн çак сив сăмахĕсем тепĕр хут аса килчĕç. Лена та çавна асăнчĕ те, унăн куçĕсенчен вĕри куççулĕ шăпăртатса юхса анчĕ.

— Ӳлĕм кайса кĕрес ан пултăр ун патне. Анчах, хăй ман пата пырса сывмар пуластăк, юриех амăшĕ хăйĕн ачине пăхнă пек пăхăттăм эпĕ ăна. Вара этем çине этемле пăхмаллине кăшт та пулин ăнланса илĕччĕ вăл,—терĕ Лена хурланнă кăмăлне пусарса.— Мишша вырăна çитрĕ пуль. Çыру та килчĕ пуль кутемĕн. Эх, Мишша! мĕн тесе çыра пĕлем ĕнтĕ ун патне? Тухтăр пĕр уйăхсăр ĕçе тухма хушмарĕ.

* * *

Çĕнĕ хваттер. Çĕнĕ хваттер хуçи Иван Степанович Вавулин—йĕркеллĕ, тӳлек, ăшă кăмăллă ватă казак.

Вавулинпа пирĕн ăнсăртран акă çапла паллашмалла пулчĕ. Кашни кунах эпир Сабиров юлташпа иксĕмĕр ирех тăрса уçăлма кая-кая килеттĕмĕр, физкультзарядка тăваттăмăр. Пĕрре çапла, Амур хĕррипе иртсе пынă май, пĕр çӳллĕ те чăнкă чуллă сăрт çине

çитсе тăтăмăр эпир. Кăмака çамки пек чулсем пĕрне-пĕри пусса кĕç-вĕк йăтăнса анас пек çакăнса тăраççĕ. Аялта — Амур. Анлă шыв çыран хĕрринчи хăйăр çинче выртакан чул муклашкисене лăпкă хумсемпе чӳхесе юхса выртать. Хĕвел тухман-ха. Хĕвеле Кĕçĕн Хинган тăвĕсем хӳтĕлесе чарса тăраççĕ. Çӳллĕ çав тăвĕсем те, пысăк тусем.

Лере, Амур лешъенче, Манчжоу-Го çĕршывĕнче Аслă Хинган тăвĕсем таçта çити курăнса тăраççĕ. Тусем çинче çĕнĕ юр выртать. Ку—хĕл çывхарасса систерекен паллă ĕнтĕ. Аслă Хинган шуралсан тепĕр уйăхран хĕлле пулать вара çакăнта.

Калаçкаласа пынă хушăра курах кайрăмăр: пысăк чул тăррине пĕр çын хăпарса ларнă та йĕри-тавралла тинкерсе пăхать.

— Ку этем мĕн туса ларать вара?—тет мана юлташ.

— Ыйтса пăхар-ха...

Эпир хăй патне çывхарнине туйман вăл. Пăхатпăр та пирĕн умра ватă старик лара парать.

— Здравствуйте, дедушка!—сăмах хушрăмăр эпир.

— Здравствуйте, здравствуйте!—терĕ вăл пире, çĕлĕкне хывса.

— Эпир ир тухрăмăр, эсир иртерех тухнă-çке.

— Ирпе сывлăш уçă. Сывласа лармааван. Çавăнпа тухрăм,—тет старик. Унтан пĕр вăхăт чĕнмесĕр ларсан татах сăмах хускатрĕ вăл.

— Ватăлса çитрĕм, ачасем. Кăштах сывмар пулса аптрарăм тата. Виçĕ кун ĕнтĕ колхоза ĕçе тухмастăп. Килте ларас килмест тата,—ну-и вот, уçăлса çӳрем пĕреххут терĕм. Кунта сывлăш уçă, сывлама çăмăл.

— Сăмах çине—сăмах. Калаçса карăмăр çав çапла...

Иван Степанович Вавулин калаçма юратакан çын. Вăл çак тăрăхри çĕршыва лайăх пĕлет. Хăй 87 çул тултарнă пулин те чунĕ ватă мар унăн. Кĕреçе пек анлă сухал, шур сухал, çӳçĕ шур пурçăн тĕслĕ, алли-ури платна та çирĕп, куçĕ-пуçĕ таса, хулпуççийĕсем анлă, çурăмĕ тӳрĕ, мăйĕ—хĕп-хĕрлĕ те чăпчăмăр. Çамрăк чухне упа пек вăйлă пулнă курăнать çак çын. Хăй калана тăрăх Вавулин утмăл султа чухне 30—40 çулхи вăйпитти çынсене мах паман, тет. Пулнă та пулĕ.

— Чăн малтан сĕм вăрман варрине килсе эпир пуçарса ятăмăр çак яла, Байкал лешъенчен килсеччĕ. Вунçичĕ çулхи çамрăк çынчче ун чухне эпĕ. Килсе çитсенех ват юмансене касса пĕр уçланкă турăмăр та пĕр пура лартрăмăр, унтан тепре—çапла ял пуçланса

карӗ вара. Каярахпа вӑрман кӑкласа тырпул акма тытӑнтӑмӑр. Вӑл вӑхӑтра пӑшалсӑр тула тухса кӗме те ҫукчӗ. Йӗри-тавра упа-кашкӑр улатчӗ, тигрсем шутсӑрах нумайччӗ. Астӑватӑп: пӗррехинче яла тигр килсе кӗнӗ. Урамӑн хӑрах пуҫӗнчен пуҫланӑ та, тӑршшӗпех тӗрӗслеме тапратнӑ выльӑхсене. Пайтах выльӑх пӑвса хӑварчӗ. Нимӗн те уяса тӑмасть: лаша-тӑк-лаша, ӗне-тӗк-ӗне, пурне те тытать те пӑвать, тытать те пӑвать.

— Тигр вӑл—чӑн хӑрушӑ тискер кайӑк. Унтан хӑрушши нимӗн те ҫук, — терӗ Сабиров старике итле-итле.

— Ку тӑрӑхра тигртан темиҫе хут хӑрушрах тискер кайӑксем те пайтах пулнӑ,—таварчӗ Вавулин.

— Мӗскерле кайӑксем апла?

— Япони интервенчӗсемпе вырӑс шурбандичӗсем. Вӗсенчен ӑштахсӑр, вӗсенчен выҫлӑх, вӗсенчен тискер кайӑк ӗмӗрте те курман-ха Амур. 1920—22 ҫулсенче мӗн тӗрлӗ асмарӗҫ пулӗ вӗсем. Кашкӑр та, упа та, тигр та ҫисен тӑранма пӗлеҫҫӗ. Шургвардеецсемпе Япони интервӗнчӗсем тӑранми тискерсем, икӗ уралла, этем кӗлеткиллӗ шакалсем вӗсем. Нимӗн те ҫитмест ҫавсене. Тӗнчере чылай пурӑнтӑм акӑ, сахалах мар. Анчах кашкӑр чӗр ҫыннах тытса ҫинине курман-ха. А ҫав ютҫӗр интервенчӗсемпе шур-

рисене лайăх пĕлетĕп: вĕсем чĕрĕ çынăн пуçне çиеççĕ; вĕсем мĕн пур халăха пĕр харăс вута пăрахса çунтарма та именмеççĕ. Çапла, ачасем...

Гражданăн вăрçи вăхăтĕнче Иван Степанович партизансен отрядĕнче шуррисемпе, ютран килнĕ пусмăрçăсемпе çапăçнă. Çавăншăн ăна лешĕсем тытса асап кăтартса вĕлерессшĕн пулнă. Анчах Вавулин вĕсен аллине лекмен. Çирĕм иккĕмĕш çулта японецсем сисмен хутран унăн килне пырса хупăрланă та, унăн ывăлне тытса тухса персе пăрахнă, хăйне те тытасшăн тем пекех тăрăшнă, анчах старик тарса пытанма ĕлкĕрнĕ, тăшман кулли пулман вăл.

Хваттер пирки сăмах хускатсан, Иван Степанович пире хăй патне куçма чĕнчĕ. Çав кунах эпир ун патне куçрăмăр вара. Пырсанах пылпа чей ĕçтерчĕ пире хуçа, çăка пылĕпе. Ку тăрăхра çăка вăрманĕсем аслă вĕт, пыллă вăрмансем.

— Кăçал пирĕн пыл сахал-ха, — тет Вавулин,—ĕçкунĕ пуçне 30 грамм кăна тивет теççĕ. Çăка чечекĕ çуралнă вăхăтра вăйлă çумăрсем пулчĕç — çав сиен туса хăварчĕ. Çăка чечекĕ çуралнă вăхăтра çанталăк уяр тăрсан пыл ăнăçлă пулать вара. Иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне кило та 750-шар грамм валеççеччĕ. 60—70-шер пăт пыл илсеччĕ пĕлтĕр

колхозниксем. Эпир те аллă пăт илнĕччĕ пулас, 35 пăтне кооператива сутрăмăр, ытти хамăра валли.

Пĕр ушкăн хăйсен ялĕ çинчен каласа панă хыççăн, Иван Степанович хăй те манран ыйтса тĕпчеме тытăнчĕ.

— Эсир ăçтисем пулатăр çак?

Хам çуралса ÿсне çĕршыва асăнтăм.

— Мускавра час-часах пулатăр-и?

— Икĕ хут çеç пулнă мĕн пурĕ те.

— Ленин мавзолейне кĕрсе курнă-и эсир?

— Курнă-çке. Икĕ хут кĕрсе тухсаттăм.

— Шăп чĕрĕ сын пекех выртать, теççĕ, чăнах çаплах-и çав?

— Чăнахах çапла. Чĕрĕ çын пекех выртать. Куçĕсене хупнă, çывăрнăнах туйăнать.

— Карчăк,—терĕ Иван Степанович сасартăк карчăкĕ енне пăхса. Вăт пирĕн иксĕмĕрĕн виличчен Мускава çитсе, Ленина кĕрсе курасчĕ. Вара хăть вилсен те юрать.

Унтан икĕ ватă çын Ленин çинчен хăйсен шухăшĕсене каласа пачĕç.

— Ленина пĕлмен çын тĕнчипе те çук пулĕ,—тет карчăк.—Ватти-вĕтти, пысăкки-пĕчĕкки,—кашниех пĕлеççĕ ăна. Кузьмина учительница кĕнеке вуласа парсаччĕ мана ун çинчен. Ленина пытарнă чухне пĕтĕм Совет çĕршывĕнче пилĕк минут хушши пĕр фабрика та, пĕр завод та ĕçлемен, тет, чугун

çулĕсем тăрăх чупакан поездсем, тинĕссенче çӳрекен пароходсем — пурте чарăнса тăнă, тет. Ленин вилнĕ, анчах унăн çав тери мухтавлă ĕçĕсем нихăçан та вилес çук. Ленин пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхне мăшкăлпа пусмăрлăха çĕмĕрсе тăкса ирĕклĕхе тухма вĕрентнĕ. Ленин патшапа çĕрулпучĕсене тата капиталистсене пĕтерме тесе аслă кĕрешӳ пуçарса янă. Вăл вĕрентни çитсе тăчĕ ав: пусмăрлăх çук ĕнтĕ. Ленин колхозсем тума вĕрентнĕ. Колхозсем çуралчĕç те çулран-çул çирĕпленсе, тĕрекленсех пыраççĕ. Ара, хамăр колхозăнах икĕ автомашина акă. Ĕлĕк тĕлĕкре те курман вĕт çавна. Тракторпа суха сухалатпăр та комбайнпа тырă вырса авăн çапатпăр. Çакă вăл Ленинăн çитнĕ ĕмĕчĕ. Ахальшĕн мар Ленин ятне мĕнпур тĕнче пĕлет. Çавăнпа Ленин ячĕ анлă Амур таврашне, аслă тинĕс хĕррине çитиччен янăрать, унăн аслă ялавĕ çĕршыв тавра вĕлкĕшсе явăнать...

Инкек куçа курăнса килмест çав. Кам аса илме пуларнă тепĕр пĕр-икĕ кунтан пирĕн тĕле пысăк хуйхă килсе тухассине?

Иван Степанович виç-тăватă кун сывмар пулса выртнă хыççăн самайланма тытăннăччĕ. Çапла пĕр ирхине: тимĕр кĕреçе, пуртă илет те вăл, пахча карташне юсама тесе тухать.Сасартăк пăшал пенĕ сасă янраса каять.

Унтан вӑрӑмӑн, чунхавалӗпе кӑшкӑрни илтӗнет. Эпир пӳртрен сиксе тухатпӑр. Пӑхатпӑр та, пахчара старик, шӑп карта ҫумне кайса ӳкнӗ те, пуҫӗнчен юн юхтарса выртать.

— Иван Степанович, мӗн пулчӗ вара капла?—ыйтрӑмӑр эпир.

Вӑл сӑмах та хушаймасть... Старике йӑтса пӳрте илсе кӗретпӗр те кровать ҫине выртаратпӑр. Тӳрех кӳршӗ ҫыннине чӗнтерсе тухтӑр патне чуптаратпӑр. Анчах тухтӑра кӗтсе илеймерӗ Вавулин. Вӑл тепӗр 10—12 минутран ӑна кӗреймесӗрех вилсе кайрӗ.

Ҫак инкекӗн сӑлтавӗ кайран тин паллӑ пулчӗ вара. 1922 ҫулта Иван Степанович партизансен отрядӗнче тӑрса пайтах интервентсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе шар кӑтартнӑ. Ҫапла пӗрреччен японецсене ҫавӑрса илнӗ те партизансем, пӗтӗм хӗҫпӑшалне туртса илнӗ. Туртса илнӗ те кирлӗ чухне валли тесе пытарса хунӑ. Иван Степанович та тӗплӗ ҫӗре пытарнӑ хӗҫпӑшала: пӗр кассине пахчана, тепӗр кассине мунча ҫенӗкӗ айне, ыттисене—тепӗр вырӑна. Вӑхӑтпа кирлӗ таран илсе тӑнӑ вӑл хӑйӗн «складӗнчи таварне». Анчах пӗр бомбӑна шыраса та тупайман Иван Степанович, ӑна ӑҫта пытарса хунине хӑй те астуса юлайман вӑл. Тепӗр 13 ҫултан, юпа шӑтӑкӗ алт-

ма тăрсан, кĕтмен çĕртен хай бомба тĕлне çитсе тухнă вăл.—Бомба кĕмсĕртетсе çурăлса каять... Çакнашкал ăнсăртран килсе çитнĕ инкеке пула вилсе выртрĕ ватă партизан, хастарлă колхозник Вавулин.

* * *

Станицăпа юнашар пĕчĕк вăрман пур. Вăрманта—застава. Кăнтăрла та, çĕрле те чикĕ хуралçисем Совет çĕршывне сыхлаççĕ. Мĕн тĕрлĕ хăрушлăх курма тивмест пулĕ чикĕре. Апла пулин те чикĕ сыхлавçисем пĕрре те шикленмеççĕ. Кунта пурăнма, кунта ĕçлеме çăмăл мар. Тĕрлĕ йывăрлăх та килсе тухать сан умна. Савăнăç та сахал мар. Ара, Совет çĕршывне сыхлассинчен савăнăçлăрах та хисеплĕрех ĕç мĕн пултăр вара? Акă, тӳлек çанталăк. Хĕвел йĕркесĕр хĕртет. Тӳсме çук шăрăх. Чикĕ сыхлавçисем хуралта. Е хуран хăрăмĕ пек кĕрхи каç. Йĕп чиксе те куç курмасть. Чикĕ хуралçи куç хупмасть. Чарусăр çил те час-часах кастарать кунти çĕршывра. Шартлама сивĕсем те сиктерсе чĕтретеççĕ. Çапах та чикĕ хуралçисене витмеççĕ сивĕсем. Чикĕ хуралçин хăйпе пĕрле яланах нимрен çывăх та никамран шанчăклă тусĕсем пур: винтовка, клинок, лаша тата йытă. «Пăшална арăмунтан ытларах юрат» тесе ахаль каламаççĕ мĕн красноармеецсем. Клинока хисеплемелле. Лашана юратмалла. Йыттуна яланах

чăн шанчăклă юлташу шутне хумалла. Апла та мар пулĕ: юлташу сана улталама та пултарĕ, йытту нихăçан та, ниçта та тăшман кулли тăвас çук. Санпа пĕрле хурала çӳреме вĕреннĕ йытă—пĕр сана анчах пĕлет, сана çеç итлет, санран пуçне накама та пĕлмест вăл, пĕлесшĕн те мар. Ютçĕршыври килсе лекнĕ бандитсене шăршăпа пĕлеççĕ йытăсем. Чипер пынă хушăрах йытă пĕр-пĕр йĕр тĕл пулать те шăршлама тапратать. Чупать вара çав йĕрпеле. Эсĕ ун хыççăн чупма ĕлкĕр кăна. Тепĕр чухне Манчжурирен килнĕ диверсантсем е шпионсем тĕрлĕ майпа улталаса чикĕ урлă каçасшăн. Хăйсен йĕррисене пăтраштарса, çухатса та пăхаççĕ вĕсем. Анчах чикĕ сыхлавçисенчен пытанаймаççех. Застава начальникĕ аслă лейтенант Соколов чикĕре вуникĕ çул ĕçлет. Вунă çул Ленинград облаçĕнче, Карели чиккинче пурăннă вăл, юлашки икĕ çул — Инçетри Хĕвелтухăçĕнче.

Соколов вăтăр пилĕк çул тултарнă çын анчах, ватă мар. Çапах та çӳçĕ кăвакарнă унăн. Ахальренех кăвакарман пулĕ çав вăйпитти çынăн çӳçĕ, сăлтавсăрах мар пулĕ.

— Вуникĕ çул хушшинче мĕн чухле бандит, мĕн чухлĕ сăтăрçă, мĕн чухлĕ диверсант тытнă пулĕ эпĕ. Кашкăр пек куштаннисем те тĕл пулаççĕ вĕсем хушшинче, тилĕ пек

чейисем те пайтах, хӗрарӑм тумне тӑхӑнса килнисем те, хресчен пулса лаша шырас сӑлтавпа чикӗ урлӑ каҫакансем те. Кашнинех каласа та пӗтерес ҫук.

Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче пӳртсен стенисене те, тӑррисене те цинкланӑ тимӗрпе витеҫҫӗ. Апла туни ҫумӑртан та, ҫилтен те сыхлать, ҫӗрме те памасть. Застава ҫурчӗсем те ҫавнашкалах: вӗсене те тимӗрпе витнӗ.

Соколов юлташ казарма стени ҫине кӑтартса ыйтать:

— Пӑх-ха, ҫак мӗн?—тет.

Пӑхатӑп та—красноармеецсен казармин хӑрах стени ала пек шӑтса кайнӑ. Казармӑна пӑшалпа персе шӑтарса пӗтернӗ.

Соколов калать:

— Кӑҫал июнӗн вунҫиччӗмӗшӗнче Япони салтакӗсен подразделенийӗ Манчжури партизанӗсене Амур хӗррине хӗссе хупӑрласа илнӗ те, лешсем шӑп заставӑна хирӗҫ пирӗн пата ишсе каҫма тытӑннӑ. Японецсем ишекен партизансене пулеметсемпе пеме тапратрӗҫ. 120 ҫынран 40-шӗ пирӗн ҫырана каҫса ӳкме ӗлкӗрчӗҫ, 80-шӗ шыва путрӗҫ... Ну, вот, ҫав Амур урлӑ каҫса пирӗн пата персе ҫитнӗ партизансене перетпӗр тесе, японецсем пирӗн заставӑна кӗмсӗртеттерме пуҫларӗҫ. И... и... и! З... з!—тесе пулеметран пенӗ пульӑсем стенана шӑтара-шӑтара тухаҫҫӗ

çав. Персен-персен чарăнчĕç вара. Кайран шутласа пăхрăмăр та—стенара 63 шăтăк...

Провокаторсен ĕçĕ çапла ĕнтĕ. Епле те пулин йĕкĕлтесе пирĕнпе вăрçă пуçарса ярасшăн вĕсем.

Çапла та пулкалать чикĕре: пĕр-пĕр китаец е кореец чикĕ урлă каçать те тӳрех заставăна пырать. Пырать те калать: „Эпĕ партизан. Мана японецсем вĕлерме тăчĕç. Вĕсен аллинчен вĕçерĕнсе тухса тартăм эпĕ. Ĕç парăр мана, вырнаçтарăр ăçта та пулин", тет. Йĕрет те хăй, куççульне те шăлать, йăлăнать те... Анчах лайăхрах тĕпчесен паллă пулать вара: хăйне хăй партизан текен этем чăн-чăн шпион иккен. Чикĕ урлă вăрттăн каçма хĕн пирки куçкĕрет улталаса каçма хăтланакансем те пур кунта.

Вырăс шургвардеецĕсем те майсăрах чее. Мĕнле майпа килсе кĕресшĕн тăрăшмаççĕ пуль вĕсем Совет çĕршывне.

Пĕр бандичĕ тăвата футбола пĕр çĕре сыхнă та вĕсем çине выртса Амур урлă ишсе каçнă. Хăйĕн кĕлетки йăлтах шывра пырать, пуçĕ кăна çиелте. Паллă ан пултăр тесех пулас, аллине йывăç турачĕ тытнă хăй, лăпсăркка та симĕс çулçăллă турат. Апла пулин те телей пулман шурбандитăн. Амурăн сулахай çыранне çитнĕ-çитменех çирĕп алла лекнĕ вăл...

* * *

Екатерино-Никольское—илемлӗ станица. Ялӑн сылтӑм енче—Амур сарӑлса юхать. Сулахайра—хура тӑпраллӑ ҫӗршыв. Ялтан хӗвелтухӑҫ еннелле—вӑрман, сопкӑсем. Ахальрен мар ку ҫӗршывшӑн пайтах юн тӑкнӑ халӑх. Илемлӗ ҫеҫенхирӗн кашни пусӑмӗ, кашни чуллӑ сопка чӗп-чӗр юнпа шӳрӗ ҫакӑ тӑрӑхра. Ҫавӑнпа пуль вӑрман кашласа ӳсет, тырпул хунаса ҫитӗнет ҫакӑнта.

Октябрӗн ҫирӗмӗшӗнче туран юлашки пароход анчӗ. Эпир, хамӑр ӗҫе пӗтерсе, Сабиров юлташпа каютӑна кӗрсе лартӑмӑр. Кӗҫ пароход тапранса та кайрӗ пирӗн. „Хамӑр кил" еннелле ҫул тытрӑмӑр.

Сталинфельдра пирӗн каютӑна тепӗр пассажир кӗчӗ.

— Аван-и, ҫамрӑк ҫынсем?—терӗ вӑл пире, иксӗмӗре те алӑ парса.

— Аван-ха... Анчах пире ӑҫтан пӗлетӗр ҫак эсир?—тетӗп эпӗ. Лайӑхрах пӑхсан аса илтӗм хайхи. Пирӗн ҫӗнӗ пассажир Носов юлташ пулчӗ тӑчӗ. Носов—Благословенная чикӗ заставин начальникӗ.

Чикӗри пурнӑҫ пит ҫӑмӑлах мар ҫав. „Тревога!" Ҫак саншӑн хӑнӑхнӑ сасӑ ӗнтӗ. Кӗтмен хыпар ҫитсен тӳрех сиксе тухатӑн вара.

Акă—Носов юлташ. Вăтăр çулхи çын. Вате мар. Анчах çамрăк пек туйăнмасть вăл.

— Кăçал ман пурнăçра пысăк инкексем пулчĕç,—терĕ те Носов, акă çапла истори çинчен каласа пачĕ:

— Гродеково районне хăвах лайăх чухлатăн. Пит лăпкă вырăн мар. Кашни çулах самурайсем кил-киле „хăна" пулаççĕ пирĕн патăрта. Мĕнпе хирĕç тухса илĕн вĕсене? Паллах, хĕçпăшалпа. Паттăрăн килеççĕ те пирĕн пата, каялла кăмăлсăр пулса тухса сирпĕнтереççĕ. Юнаса пурăнаççĕ тата, пĕрмаях юнаççĕ пире. Мĕнпе те пулин чуна ыраттарасшăн, мĕнпе те пулин суран тăвасшăн. Кăçалхи çул вĕсем чăнахах асăнтарчĕç мана. Эх, мĕн каламалли пур вара... Пĕлтĕр июнь уйăхĕнче ман сасартăк ултă çулхи хĕрача çухалчĕ. Ку ак çапла пулчĕ. Хамăр заставăран виççĕр метра яхăн çеç çерем ватса çĕрулми пăрахрăмăр, купăста лартрăмăр тата. Çапла пĕрреччен арăмпа ача çĕрулми купалама тесе пахчана тухнă. Амăшĕ ĕçлет, хĕрача выляса çӳрет. Шăп çав хушăрах хĕрача çухалать ман... Таçта та çитрĕмĕр, такамран та ыйтса пăхрăмăр—çук. Паян кун та çук ача. Çапла пулчĕ. Тепĕр сакăр çулхи ывăл пурччĕ. Красноармеецсенчен ниçта та хăпмастчĕ вара. Ир те, каç та, кăнтăрла та заставăрах пурăнатчĕ. Çывăхра шкул çук

пирки килтех вӗренетчӗ. Амӑшӗ учительница пулнӑ та... Пӗрреччен ҫапла ывӑл пӳрт умӗнченех граната тупать. Тупать те тӳрех киле, мана кӑтартас тесе, йӑтса пырать. Эпӗ килте пулман. Гранатӑна амӑшне парать ача. Ҫапла пӑхкаласа тӑнӑ хушӑрах граната ҫурӑлса та каять. Ывӑл труках вилет. Арӑм тӑватӑ талӑкран вилсе выртать. Ҫакӑн хыҫҫӑн пӗр-ик эрне хушши ӑнсӑр пулса ҫӳрерӗм эпӗ. Пуҫра пӗр шухӑш та ҫук. Сӗрӗм тивнӗ пек пурӑнтӑм. Чирлесе кайрӑм вара. Госпитале илсе кайрӗҫ. Унта пӗр уйӑх выртсан Кавказа ячӗҫ, курорта.

Сывалнӑ хыҫҫӑн Гродековоран кунта куҫарчӗҫ. Центра куҫарас терӗҫ те, кунтах хӑварма ыйтрӑм. Хӑнӑхса ҫитрӗм ӗнтӗ ҫак ҫӗршывра пурӑнма. Ман пурпӗрех центрта никам та ҫук вӗт. Аттепе анне иккӗшӗ те вилнӗ, пичче граждан вӑрҫинче сас-чӳсӗр ҫухалчӗ. Ҫывӑх ҫын урӑх никам та ҫук ман унта. Кунта, чикӗре, юлташсем нумай хӑть.

Тул ҫутӑлса ҫитнӗ вӑхӑтра пароход пирӗн гарнизон тӗлне ҫывхарчӗ. Пароход хамӑра кирлӗ тӗле ҫитсен ӑна чарма капитанпа калаҫса татӑлтӑм эпӗ. Пристань ҫук та унта, пуш ҫыран хӗрринех якорь пӑрахса чарӑнма тиврӗ.

Хороших капитана вӑл хушнӑ ӗҫе туни ҫинчен рапорт патӑм. Чикӗре хамшӑн юлма

кĕçĕн командире—Иван Захарович Дудорева хушса хăварнăччĕ те, вăл мĕнле ĕçленине пĕлме тесе, тӳрех унта карăм эпĕ.

— Ну, мĕнле пурăнатăр-ха?—тесе ыйтсан, Дудорев çемçен каларĕ:

— Лăпкă. Японецсем кашни каçах Амур тăрăх каллĕ-маллĕ моторлă лодкăпа кастарса çӳреççĕ. Пĕрре Сунгарирен тухаççĕ те, тепре Сунгарине кĕрсе каяççĕ, Манчжурире хутран-ситрен пăшал перкелеççĕ. Эпир пĕр шпиона тытрăмăр. Ытти чип-чиперех. Лăпкă...

---

## ÇĔН ХУЛАРИ КИВ ЭТЕМ

Вăтам Атăл таврашĕнче, Чаллăпуç районĕнче çĕнĕ Таяпа ятлă ял пур.

Пĕрреччен ĕç умĕн çак ял çыннисем урама тухса ларнă та, хĕрсе кайсах калаçса лараççĕ.

— Янаула нимĕн те çитместь. Унта пурте тулă кулачи çиеççĕ. Майсăр пуян вĕт вăл Янаул çĕршывĕ. Каяс пулсан çавăнта каймалла ĕçлемешкĕн,—тет пĕри.

— Сибирь пек пуян çĕршыв тĕнчипе шырасан та тупаймăр эсир. Ман шутпа кайса-кайса, Сибирех çитмелле. Урăх нимĕн те мар,—тет тепри.

Виççĕмĕш те сăмахсăрах лармарĕ.

— Сахалин! Вот ăçта каймалла, каясах тетпĕр пулсан.—Çакнашкал пулчĕ кун сăмахĕ.

— Кунта та пурăнма начар мар-ха та. Колхозра тырă ăнăçса пулать, çапах каярха,—тет тепри.—Çĕнĕ хуласем тума та çынсем сахалах мар кирлĕ вĕт!

— Ман пуçана виçĕ çул Камчаткăра пурă-

нать. Темиçе çыру та çырчĕ ĕнтĕ. Хăй патне йыхăрать. Мĕн кирлĕ, çав пур, тет. Рабочисем унта икшер-виçшер пин манет илеççĕ тет уйăхне. Мануфактура тавраш̆ мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ параççĕ. Чăн хаклă таварсене чăн юнĕ хакпа сутаççĕ тет тата. Айтăр Камчаткăна!—çапла сăмах татрĕ юлашки.

Çакăн хыççăн Таяпа çыннисем хатĕрленме тапратрĕç. Каланă сăмах çирĕп пулчĕ çаксен. Кĕркунне тырпул вырса, авăн çапса пĕтерсенех çула тухса кайрĕç.

Владивостока персе çитнĕ çаксем. Халличчен тинĕс курман çынна тинĕс чăнахах хăрушлăн туйăнать пулĕ çав. Камчаткăна 10—12 талăк хушши пăрахутпа тинĕс урлă каймалла вĕт-ха.

— Пулмасть манран çавăнта таçта хăямата çитиччен шыв тăрăх çӳреме. Кунти çĕр çинче ĕç çитмен-и мĕн?—терĕ пĕри.—Каймастăп эп унта.

— Манран та унта кайса пулмасть. Владивостокрах ĕç пур пулĕ-ха,—терĕ иккĕмĕшĕ.

Камчаткăна кайма пăрахсах пурте Биробиджана çул тытрĕç пирĕн Таяпа çыннисем, пĕр пин çухрăма яхăн каялла.

Биробиджан çамрăк хула. Вăл сĕм вăрманта, сопкăсем хушшинче ӳссе çитĕнет. Çул-

ран-çул, кунран-кун ӳсет çĕнĕ хула. Пĕлтĕр вăрман кашласа ларнă çак вырăнта, кăçал 3—4 хутлă çуртсем çитĕнеççĕ. Чĕтренсе тăракан шурлăхсене типĕтеççĕ те, тункатисене трактăрсемпе кăкласа тип-тикĕс те яп-яка площадкăсем, урамсем тăваççĕ.

Пирĕн Таяпа çыннисем те майсăрах юратса пăрахнă çак çĕршыва, килнĕ-килменех вĕсем ак çапла калаçса та илчĕç:

„Биробиджанра пурăнма начар пулас çук. Çăкăр-тăвар çителĕклĕ, кĕпе-тумтир кирлĕ таран, вутти-шанки йĕри-тавра: кас та çунтар, кас та çунтар"...

Калашлех, мĕн кирлĕ, вăл пур çак хулара. Анчах çын çитмест. Фабрикăсем тумалла— çынсем кирлĕ. Шкулсем тумалла—çынсем кирлĕ. Таяпа çыннисем килнĕ-килменех çакна лайăх ăнланчĕç. Вăрман касма çынсем кирлĕ. Пĕр çĕрте пысăк укçа тӳлеççĕ, тепĕр çĕрте тата пысăкрах. Унта та ĕç пур, кунта та ĕç пур.

— Эпир, пĕр ялтан килнĕскерсем, пурĕ пĕрле ĕçлĕпĕр, юлташсем,—терĕ пĕри, Белов хушаматли.—Юрать пулĕ вĕт?

Килĕшрĕç. Фанера туса кăларакан завод тума пуçăнчĕç пирĕн Таяпа çыннисем. Пĕр кун ĕçлеççĕ, иккĕ, виççĕ. Йĕри-тавра тылапуççи кăна çак вырăнта. Тылапуççисене тасатрĕç, çĕре тикĕслерĕç. Унтан заводăн ни-

кĕсне хума пуçларĕç. Завод куç умĕнчех çуралать, ÿсет.

— Кăçалтан рабочи пулатăп ĕнтĕ,—тет пĕри, Антонов ятлăскерри.—Рабочисене мĕн кирлĕ—фабрика лайăхрах ĕçлетĕр. Ĕç ăнăçлăн пулса пытăр. Пурнăç савăнăçлă та çителĕклĕ пултăр,—çакă кирлĕ. Çак инçетри çĕршыва килнĕскер, тымар ярсах пурăнасчĕ-ха. Каллĕ-маллĕ çÿресе вăхăта та ирттерместĕп, укçа та тăкмастăп...

Килĕштерсе ĕçленĕ чухне пурнăç яланах ăнса пырать. Пирĕн Таяпа çыннисем те лăп-ланса ĕçлеççĕ çĕнĕ хулара.

Пĕр çулталăк пурăнсан, çакăнта ĕçлекен-сен ĕçĕ лайăх курăнма тытăнчĕ: хула аслă-ланчĕ, хитреленчĕ, фабрикăсен трубисем çă-ра тĕтĕм кăларса мĕкĕрме тытăнчĕç. Йышĕ ÿсет. Ĕçĕ ăнăçлăн сарăлать. Белов, Антонов тата ытти рабочисем те малаллах каяççĕ. Малтанах пурте пекех пĕр шутраччĕ. Каярах-па пĕри бригадир пулса тăнă, тепри—де-сятник, виççĕмĕшĕ—маçтăр.

Биробиджан халăхĕ ĕçе кĕр! тухать те вăй парса ĕçлет. Таяпа çыннисем те кая юлма-рĕç. Вĕсем хăнăхса çитрĕç хулара пурăнма. Завод кăшкăрсан ĕçе каяççĕ те, завод кăш-кăрсан ĕçрен таврăнаççĕ.

— Айтăр пурĕ пĕрле пухăнса пĕр çĕрте пурăнас!—терĕç çынсем.

Каларĕç—турĕç. Пурĕ пĕрле пухăнчĕç те Биробиджанран икĕ çухрăмра хула тулашĕнче пĕр ял пуçарса ячĕç çаксем. Ялне «Çĕнĕ ял» терĕç. Çуртсем лартрĕç, выльăх-чĕрлĕхсем туянчĕç. Пурăнаççĕ.

Кĕтÿре пĕр ĕни варвиттиллĕ пулсан, пĕтĕм кĕтĕве варалать тенĕ сăмах пур авалтанах. Çакнашкалах пулас çав этемсем хушшинче те.

Биробиджанри рабочисем хушшине пĕр этем пырса ермешнĕ—Власов Мĕкĕте ятлăскер. Пынă та, вăл вĕçенкайăк майлă вырăнтан вырăна куçма тапратнă. Малтан хăма çурма тытăннă Мĕкĕте. Пĕр уйăх ĕçлесен пăрахнă вăл ĕçе—урăх çĕре куçнă, конюха. Икĕ-виçĕ эрнерен конюх ĕçĕ йăлăхтарса çитернĕ Мĕкĕтене. Пăрахать те, вăрман касма каять çакă.

— Мĕн кашни уйăхра вырăнтан вырăна çÿретĕн çак эсĕ, Мĕкĕте?—терĕç çакна.

— Ара пулă тарăнараха юрататъ, этем лайăхраха пахалать,—тесе хучĕ çакă.

— Летун, теççĕ апла тăвакансене..

— Теççĕ те пулĕ çав...

Сăмахран питех аптраса тăмасть Мĕкĕте. Сăмахран çеç мар, ыттисенчен те çаплах вăл. Ĕçрен таврăнсан яланах шур кулачă илет хăй, пĕрер кило. Илет те, тÿрех сĕтел хушшине ларса авăртма тытăнать кулачча. „Ат-

те, кулачă пар-ха“ тесе икĕ ачи йăлăнса тăраççĕ ашшĕ умĕнче. Мĕкĕте вăйлă аллисемпе пĕррех сулса сире-сире ярать ачисене.

Пустав таварсем туянма тесен, татах маттур вара çак çын. 20-шер, 30-шар метр таран туянать вăл мануфактура.

Илсе таврăнать те вара, тӳрех арчана персе чикет. „Атте, мана кĕпе çĕлетсе пар-ха“ тесе йăлăнакан ачисене сăмах та уçтармасть. Арăмне те итлемест вара вăл. Яланах хăйĕн пуçне мĕн пырса кĕрет—çавна тăвать.

Вăрман касас ĕç питех çăмăл мар пулас. Пăрахнă та тухнă унтан пирĕн паллă этем.

— Мĕкĕте, эсĕ татах килĕштерейместĕн мар-и?—терĕç çакна „Çĕнĕ ял“ халăхĕ.

— Тумтир çĕтĕлет унта. Эпĕ пĕр майлăрах вырăна каяс тетĕп-ха,—çапла тавăрчĕ вăл.

Нумаях та иртмен, пирĕн Мĕкĕте хăй валли „çăмăл ĕç“ тупнă. Пасара тухнă та сехет йăтса çӳрет. „Сехет, сехет кам туянать—çав телейлĕ пулать. Таварĕ хаклă, хакĕ йӳнĕ. А, ну!“—шарт-та-шарт çапла кастарать хайхискер.

Пит нумай та çӳреймен пулас пирĕн Мĕкĕте. Милиционер пырать-тытать те ăна, тӳрех милици отделенине çавăтайса каять.

— Ку мĕнле сехет?

— Чип-чипер сехетех-çке,—тет Власов.

— Ăçтан тупрăн?
— Туянтăм...
— Камран?
— Пĕр этемрен.
— Апла пулсан мĕншĕн сутатăн?
— Укçа пĕтсе çитрĕ. Ача-пăча выçă ларать...
— Ку санăн вăрланă сехет. Унăн хуçи акă, теççĕ те милицире, сехете тытса илсе хуçине тавăрса параççĕ. Кунсăр пуçне штраф тăваççĕ хайхискерне.

„Çĕнĕ яла" таврăнать те Мĕкĕте, сурсах ятлаçать. „Пурнăç-и çак. Йўне илнĕ сехете хакла сутма памаççĕ! Паянтан пурăнас ан пултăр кунта. Ыранах тухса каятăп!" тет.

Тепĕр кунах арăмне, икĕ ачине илет те Власов—вокзала.

— Чăн лайăх пурнăç вăл Атăл таврашĕнче. Таяпанах каятăп!—тесе калаçса ларать вăл станцире.

Кĕç поезд персе çитрĕ. Мĕкĕте арăмĕпе ачисене вагона вырнаçтарасшăн çўрет. Начальник патне пырать: „Начальник юлташ,— тет вăл,—а начальник юлташ, çичĕ талăк ĕнтĕ позд çине лараймасăр пĕтĕм çемьепе вокзалта ларатăп. Неужели вара ачасене çакăнтах хĕн кăтартса вĕлерес ман, а? Поезд çине ларма хут çырса парсамăр...

— Билет пур-и?—ыйтать начальник ăшă кăмăлпа.

— Çук çав. Билет памаççĕ.

Станци начальникĕ хут çырса парать çакна. Кассăран черетсĕрех билет илмелли хут.

— Васса,—тет Мĕкĕте хăйĕн арăмне.— Атя часрах, мĕскер лăпланса ларатăн эсĕ тымар янă пек. Çыпăçса лармастăн пулĕ вĕт?

Хăпăл-хапăл тапранать те çемьипе, вагон патне пырса кондуктора йăлăнать:

— Кондуктор юлташ! Акă пăхăр-ха: начальник мана тӳрех билет илмелли хут пачĕ. Тархасшăн лартăр-ха ман çемьене. Ахальшĕн эпĕ çак вокзалта 15 талăк ларатăп ĕнтĕ. Эп кассăна чупам, билет илмешкĕн...

Кондуктор та йăшă кăмăллă çын пулчĕ. Вăл Власовăн арăмĕпе ачисене вагона вырнаçтарчĕ. Çав вăхăтра Мĕкĕте касса умĕнче билет илме тесе тăракан халăха урлă-пирлĕ сире-сирех кассир умне пырса тăрать.

— Миçе билет?—тет кассир.

— Икĕ билет.

— Хăш станцине çитиччен?

— Чаллă-Пуçне...

— 250 тенкĕ пар часрах.

— Ытла нумай-çке!—тет Мĕкете.—Вара ман билетшăнах 250 тенкĕ тӳлеме тивет-и-ха?

— Эсĕ калаçса вăхăта ан ирттер-ха, юлташ,—теççĕ çакна ыттисем.—Илетĕн пулсан ил те, тух часрах.

— Илĕр хăвăр!—тесе хучĕ хĕрсе çитнĕ Мĕ-

кĕте. Касса умĕнчен билетсăрах тухрĕ. Шăп çав вăхăтра звонок пачĕç.

— Мĕкĕте! Мĕкĕте тетĕп!—тесе кăшкăрса ячĕ вагон алăкĕнче тăракан Васса. Анчах Мĕкĕте вокзалтан тухмасть те.

Кĕç поезд тапранса та кайрĕ. Арăмĕпе икĕ ачи поздпа хĕвеланăçнелле—Таяпа еннелле кустарчĕç. Паллакан çынсем Власова сырса илнĕ те ятлаçаççĕ.

— Эсĕ арăмупа ачусене билетсăр, пĕр пус укçасăр, тата пĕр татăк çăкăрсăр лартса ятăн-çке. Часрах скорăй поезд çине ларса хăваласа çит! Выçă вĕлеретĕн вĕт çемйӳне.

Тепĕр виçĕ кунтан ларса кайнă вара Мĕкĕте. Таяпа çыннисем пайтах хĕрхенчĕç унăн арăмĕпе ачисене. „Васса икĕ ачапа мĕнле çитĕ ĕнтĕ. Эх, ку кулатник Мĕкĕтине! Арçын тесе пурăн ĕнтĕ çав çынпа!"—çакнашкал час-часах калаçнă „Çĕнĕ ялта". Икĕ уйăхран „Çĕнĕ яла" çыру персе çитрĕ. Вуласа пăхаççĕ те—Мĕкĕтерен хайхискер.

...„Ну, Биробиджанра пурнакан ялйышсем. Сире пĕр-виç сăмах пĕлтерес терĕм. Эпĕ киле пит лайăх çитрĕм. Пĕр пин те пилĕкçĕр манет чăнкăлт укçа çитертĕм. Тӳрех ĕне туянтăм 70 манет парса. Ытти укçа халь хам çумрах—тыткаламалăх пур. Пурнăçа ничево пурăнатăп. Арăмпа ачасем хамран 10 кун каярах персе çитрĕç. Пурте ырă, сывах

халĕ. Васса та билетпах килнĕ пулсан укçа нумай пĕтетчĕ.

Ачасем киле ырă сывах çитрĕç. Пĕр ачи киле çитсен сасартăк чирлесе ӳкрĕ. Климат килĕшмерĕ пулмалла. Ну, халь пурне те салам ярап. Çитес çул татах вербоватсă туса Биробиджана пырас тетĕп. Унта пыма укçа параççĕ...

Микита Власов".

Биробиджан хули—çĕнĕ хула. Мĕкĕте пек кив этемсене хисеплемест вăл. „Çĕнĕ ялсем" те килех темерĕç ăна. Кирлĕ мар унашкал сулланса çӳрекенсем. Пĕр кайнăскер ан килтĕрччĕ, таси паха,—терĕç.

## ПУРĂНАТПĂР ПУРĂНĂÇА!

Пурăнатпăр пурăнăçа!—тенĕ Егор Иванчă. Савăнса чĕрне вĕççĕн утса, икĕ аллине çурăм хыçнелле тытса, тилĕнни пек чее куçĕсене кăшт чалăштарса, шĕвĕр сăмси тăрăх пăхса çӳренĕ вăл.

Ял тыткăнра пулнă, ял Егор Иванчăран именнĕ, шикленнĕ...

Ял Егор Иванчăран хăранă тата вăрттăн тарăхса пурăннă ун çине. Анчах пур те тарăхман, пурте именмен: Егор Иванчă умĕнче йăпăлтатса ӳксе пуççапакансем те пулнă, çав вăхăтрах унпа пĕр каварлисем те сахалах пулман.

— Хырăмĕ тутă та куçĕ выçă ĕнтĕ çакăн,— тетчĕç нумайăшĕ Егор Иванчă çинчен.

— Çук, апла мар: куçĕ те, хырăмĕ те выçă унăн; вăл—яла ĕмсе пурăнакан сĕлĕх,— терĕ пĕррехине Егор Иванчă çинчен Мĕтри Унеçĕмĕ. Çапах та куçкĕрет калама хăранă ял çыннисем çакăн пек сăмахсене Егор Иванчă çинчен. Вăхăчĕ çавнашкал пулнă çав ун чухне, хăрамалла пулнă. Петюк—«пурăнăç

умне» тухса курайман çынччĕ. Вăл Егор Иванчă патĕнче тарçăра тертленсе пурăннă. «Паяна» пурăнса иртерсен «ыранхи» çинчен шухăшласа тинкине кăларнă текех. Мĕншĕн тесен, хуçа ăна ыранах ĕçрен кăларса ярса, урăх çынна илме пултарнă.

Çирĕм пĕрремĕш çулхи выçлăхра Егор Иванчă пек пуйса юлакан сахал пулнă пулĕ.

— Пĕр çур ялĕ вилсе пĕтес пулсан—çитетчĕ пурăнăç,—тенĕ вăл çав çулхине. Ял катăлнă, халăх тăкăннă. Пĕр Егор Иванчăпа майлисем çеç савăннă.

— Пурăнатпăр пурăнăça! Çапла вĕт, юлташ!—терĕ тет пĕрре Егор Иванчă Петюка, хулпуççинчен шарт! çапса илсе. «Юлташ» сăмаха юриех палăртарах каланă пекки тунă вăл.

— Эсĕ маншăн юлташ мар çав,—тесе тавăрнă Петюк хуçана хирĕç.

— Мĕншĕн тата? Ха?! Хальхи самантра «юлташ» теççĕ вĕт-ха,—шăл витĕр кулса илнĕ вара Егор Иванчă.

— Мĕншĕн тесен эсĕ—хуçа, эпĕ—сан тарçу. Хуçапа тарçă юлташлă пулма пултараймаççĕ вĕсем,—тенĕ ăна Петюк.

— «Юлташ» тетĕр-çке эсир пĕрне-пĕри... Сирĕн, комсомолецсен «юлташĕсем» ĕнтĕ. Çапла вĕт? Çапла пулмасăр?—тенĕ лешĕ каллех, çине тăрсах тăрăхласа. Хуçа чей ĕçнĕ.

Петюк та чей ӗҫнӗ.

— Вӑт, ху ман сӗтел хушшинче, манпа пӗрле чей ӗҫетӗн пулин те мана юлташу шутне хумастӑн...

— Сӗтелӗ санӑн, тӗрӗс... хуҫа сӗтелӗ...

— Мӗн тӑватӑн эсӗ ху сӗтеллӳпе? Санӑн аҫу та, аслаҫу та—пурте ҫапла, сан манерлех ирттернӗ ӗмӗрсене... Каланӑ вӗт: «патшаран патша ҫуралать, улпутран—улпут, кӗлмӗҫрен—кӗлмӗҫ», тесе. А эсӗ—ҫук ҫын ывӑлӗ... Хуҫана лайӑх итлесен, унӑн сӑмахӗсене кӗрӗшсе пурӑнсан тин ҫын пулӑн эсӗ. Ӑнлан, тавҫӑрса ил ҫакна!—тенӗ вӑл Петюка.

Ӗҫке-ҫике хӑй пеккисене ҫеҫ йыхӑрнӑ Егор Иванчӑ. Юрӑсем юрлама хӑй пуҫарса панӑ вара ӗҫкӗ-ҫикӗре:

Пурӑнатпӑр пурӑнӑҫа,
Хамӑр ялта хамӑр хуҫа.
Ҫапла мар-и, тӑвансем?
Ҫапла мар-и, хӑнасем?

Хӑнасем харӑссӑн тав туса ырӑ суннӑ ӗҫкӗ хуҫине:

Ара,
Ҫапла пулмасӑр вара!—
Пурӑнатпӑр пурӑнӑҫа.
Ялта эпир кӑна хуҫа.

Хӑнасем савӑннӑ, ташланӑ, юрланӑ, килӗсене саланнӑ.

Петюкӑн та килӗ пулнӑ. Вӑл та кайкаласа килнӗ унта. Анчах савӑнман Петюк килне кайкаласа килнипе, хурланса ҫеҫ таврӑннӑ вӑл унтан. Ҫапах та Петюк «ман килҫурт пур, ман хуҫалӑх пур» тенӗ.

Егор Иванчӑ пурӑннӑҫемӗн ҫулран ҫул харсӑрланса пынӑ.

«Пурӑнатпӑр пурӑнӑҫа!»

«Пурӑнатпӑр» тенӗ Петюк. Вӑл, ҫил сирсе кайнӑ пӳрчӗ тӑррине витме тесе, хуҫаран улӑм ыйтнӑ.

— Парас,—тенӗ хуҫа. Арӑму пӗрер эрне тырӑ вырса парӗ вара...

* * *

Петюкӑн ят тухать.

Хӗрлӗ Ҫара тухса каяс умӗн Егор Иванчӑ халав парать ӑна.

— Ну, Петюк, сана салат ҫӑкӑрӗ ҫиме илсе каяҫҫӗ... юрать. Кай. Таврӑнсан хӑвӑн хуҫу патне—Егор Иванчӑ патнех таврӑн. Ӗҫ ҫителӗклӗ ман. Кам ӗҫлет—ҫав ҫиет...

Петюк сӑмах та чӗнмен. Вӑл хӑйне-хӑй ҫеҫ калана: «Чим-ха, тӑхта эсӗ, тӑранми кӗлетки»...

Хуҫи кулянса юлнӑ.

— Шалкӑ, тенӗ вӑл.—Вӑкӑр пек маттур та ырми-канми ӗҫчен работнике Хӗрлӗ Ҫара илсе кайрӗҫ. Пӑсӑлса таврнать ӗнтӗ унтан, паллах...

Калашлех, Егор Иванчă кăмăлне каймалла вĕренмен Петюк Хĕрлĕ Çарта. Хĕрлĕ Çар ретĕнче чи пахи—дисциплина. Петюк икĕ çулта та дисциплинăна пăсман, вăл примерлă, хастарлă красноармеец.

...Тĕттĕм, йĕп чиксе куç курми тĕттĕм каç. Пĕлĕтсем хупăрланса килнĕ. Çиçĕм çиçсе тăнă. Петюк постра тар складне хуралланă. Сасартăк—чăш-ш-ш! тунă та, пĕр самантранах аслати шартлаттарса çапнă. Петюк ăнсăр пулнă... Ăн кĕрсенех сиксе тăнă та татах склад тавра пăхса çаврăннă. Сасартăк ăна склад çийĕнче пĕчĕк çулăм чĕлхи вĕлтлетсе сикни курăнса кайнă. Ку—çиçĕмрен тивнĕ çулăм пулнă-мĕн. Çиçĕм складăн черепицăллă çивиттине пĕр енчен çĕмĕрсе, тепĕр енчен тухса кайнă иккен! Çав самантра пĕтĕм склад тĕппипех пĕлĕте çĕкленсе саланса кайма пултарнă. Анчах Петюкăн шикленме вăхăт пулман. Вăл тӳрех караул начальникĕ патне сигнал панă.

— Тревога!

Черепица айĕнчи йывăç стропилăна çулăм хыпса илнĕ. Караул персе çитнĕ, вара тар склачĕ çинчи пушара вăхăтра сӳнтернĕ. Петюк часовой вилĕмрен хăтăлнă, юлташĕсене те, вунсакăр патвар красноармееца, вилĕмрен çăлнă. Çакăншăн Петюка полк командирĕ

пĕтĕм полк умĕнче тав тунă, тата ятран çырнă кĕмĕл часси парса парнеленĕ.

Петюк пĕтĕмпех улшăнса таврăнчĕ Хĕрлĕ Çартан: хастарланнă, çивĕчленнĕ вăл çарта.

Петюк таврăнсанах ялта «Авангард» колхоз пуçланса кайрĕ. Чухăнсемпе тӳрĕ вăтамсем тӳрех çырăнчĕç колхоза.

Петюк—колхоз председателĕ. Петюк—коммунист. Петюк ялти пĕтĕм актива хăй тавра чăмăртакан çын. Çивĕч те çынна кӳрентермелле мар калать вăл. Хăй çине илнĕ ĕçсене Петюк пурне те тăватех.

Колхозра сĕт-çу ферми организацилемелле пулать.

— Хам пушмак пăрăва никĕсе паратăп,— тет Петюк.

Арăмĕ çĕрĕпе макăрать.

— Пĕртен-пĕр пăрăва унта кайса патăн. Çынсем пур—килте пурăнăç тăвасшăн, эсĕ пурлă-çуклă хуçалăхна салататăн,—тесе ӳпкелет вăл упăшкине.

— Салатмастăп эпĕ, Альтюк: пуçтаратпăр, халăхпа пĕрле перлешӳллĕ пурлăх тăватăп, ăнлан...

Альтюк çиленнĕ, Альтюк виçĕ кун сăмах хушмасть упăшкине. Петюк, çĕрлесенче çеç киле таврăнса выртсан, йăпатнă ăна:

— Асту: «эх ытла та пиçмен пашалу пулнă эпĕ» тесе хăвна хăвах ятлăн акă,—тесе ӳкĕт-

ленĕ вăл арăмне. Çавăрăнна вара Альтюк Петюк майлă, кӳршĕ арăмĕсене те каласа панă ун çинчен.

— Ферма тумалла, ферма кирлĕ!

Пурăна киле «Кивçурт» çеремне ватса тулă акма кирли çинчен сăмах хускатрĕ Петюк.

— Тулă мар, пăри акас!

— Мĕншĕн?

— Пăри пархатарлă тырă, мĕнпур пуян пăри акнă...

— Пирĕншĕн тулă пархатарлă. Ыран икĕ бригади — Кивçурта, — командă пачĕ Петюк.

— Юрать, Петĕр Матвейчă.

Семен Макарчă, единоличник, ялтан ăсатнă кулаксене итлесех пулас çав, иртерех тулă акма каякансене хытăрах кулянтарас тесе, юриех пушăлла хирĕç пулнă. Вăл анкартипе чупса тухнă тет те, кĕрет тет ялпала, иртерех акма каякан колхозниксене хирĕç. Хăй çав хушăрах нимĕн асăрхаман пек пулса пырать, тет.

— Çырлахтăр анчах, пушăлла хирĕç пулатăн-çке эсĕ пире, Семен Макарчă? — тенĕ ăна бригадир Иван Павăлчă.

Лешĕ, çăварне шыв сыпнă пек, нимĕн те чĕнмесĕр иртсе кайнă вĕсенчен.

— Чĕлхи çĕтнĕ унăн!..

— Чĕлхи мар, ăсĕ ӳксе юлнă!..

— Ха-ха-ха!!

— Эпир тулă тиесе килнине те пушăлла тĕл пулать ĕнтĕ вăл,—тесе кулнă акма каякан колхозниксем Семен Макарчă тешмĕш тунинчен.

Уйри ĕçсене пухса кĕрсен, колхозниксен аслă пухăвĕ пулать. Петĕр Матвейчă доклад туса парать:

— Паян лайăх акă, ыран тата лайăхрах пулĕ. Капла марччĕ, капла пулман вĕт, кашниех пĕлетĕр. „Кĕлмĕçрен кĕлмĕç çуралать", тетчĕç ĕлĕк кулаксем. Çук, ку тĕрĕс мар пирĕн Совет çĕрĕнче. Вăл ĕлĕк çапла пулнă. Пăхăр халĕ эсир—Петĕр Матвейчă, Павăл Митрăч, Лукка Митрофанчă тата ыттисем çине те. Халĕ пирĕн „Авангард" колхоз членĕсем, тăрăшса ĕçлекенсем, пурте пуян çынсем пулчĕç ĕнтĕ, тет колхоз председателĕ.

Ку пухура 65 çулхи старик Васили Семенчă та çапла каласа хурать:

— „Ватă çын—тăватă çын шутне тăрать",—тетчĕç те ĕлĕк, апла мар çав: çамрăксем пирĕнтен irттереççĕ акă! Тахçанах хырçă-марçăна тӳлесе татнă—мансах кайрăм, палли те пулмарĕ. А ĕлĕк, ай-яй аватчĕç пире! Сĕветчĕç виçĕ хут тире. Совет влаçĕ пулсан та чухăнсемшĕн колхоз тăвиччен йывăрлăхсем пĕтменччĕ.

Хавассăн алă çупаççĕ старик сăмахне.

— Пурăнатпăр пурăнăça!—тенĕ пекех пулчĕ ку старик сăмахне хапăлласа хыттăн алă çупса яни.

## КУКАҪИ КАЛАВӖ

Хам ҫăпатапа ҫӳреме тивӗҫлӗ пулнишӗн пайтах савăннă эпӗ ача чух.

„Ҫăпата пулман пулсан, мӗн сырса ҫӳретт ӗм-ши эпӗ?“—тесе те пӗрре мар каланă пулӗ.

Атте туса панă ҫăпатана вăрт-варт анчах тытса сыраттăмччӗ. Тăласем ҫӗтӗк пулин те, майлаштарса шăрҫа пек илемлӗ, Сӗнтӗрвăрри районӗнчи Шуршăл чăвашӗсем калашле, „тăпăл-тăпăл“ урах тăваттăмччӗ. Сăхмана та ҫӗтӗкки курăнмалла мартарах тăхăнса ҫӳреме юрататтăм. Пиҫихине анне вӗрентнӗ пек вӗче ҫинчен мар, шăп пилӗк тавра, салтак пек шартлаттарса ҫыхаттăм; кӗпе аркине хутран-ситрен турткаласах тăраттăм. Ҫавăншăн мана анне „шукăлли“ тесе ят панăччӗ.

— Шукăль Ваҫҫа пек пӗчӗклех капăр тумланасшăн тем тăрринчен сикӗччӗ, пулать-мӗн ача!—тесе пӗрре ҫеҫ ятламан мана анне.

Анчах пӗрмай атте ҫине шанма пулмарӗ. Тӗнче вăрҫи пуҫлансанах йна салтака тытса кайрӗҫ те мана ҫара уран тăратса хăварчӗҫ.

Вăл çулхине эпĕ çиччĕ тултарса саккăр çине пуснăччĕ. Хам çăпата тума пĕлместĕп, сичĕ ача валли çăпата туса ларма аннен ерçӳ çитместь. Çавна пула мункун, эрнинчен пуçласа шăп хĕле кĕричченех çара уран çӳреттĕмĕр вара. Урасем çинче пылчăк кĕреçепе хырмалăхахчĕ—катмакласа çарăк ак хăть...

Шăмаш шывĕ хĕрринче тăмран шăрпăк пӳрнески мăннăшĕ кирпĕч тăваттăмăр та, пĕрмай пылчăк çинче ишнĕ пирки сăранланса кайнă урасем çурăла-çурăла пĕтетчĕç. „Шип-шип кăлăк" пулатчĕ. Çапах та хамăрăн юратнă ĕçе пăрахмастăмăр эпир.

— Кирпĕчрен чул çурт туса лартар та акă— вара вăрçăсем килсе тупăпа персен те çĕмĕреймĕç,—тетчĕ Ларик пиччесен Пантелеймонĕ.—Çапла вĕт, е-е-й?

Эпир эртелпе алай тăваттăмăр:

— Конешнă.

Тырă вырнă чухне хăмăл çинчен çара уран çӳреме нимĕн те марччĕ маншăн; ура хырăмĕсене ыраш хăмăлĕ чĕрсе пĕтерни пуçпех аптăратмастчĕ...

Кĕркунне çанталăк сивĕтсен татах ура сырмалла пулса тăратчĕ, татах çăпата çукки „пуçа касатчĕ".

Пĕррехинче пирĕн пата Шуртавăшри кукаçи килчĕ.

Вăл пӳрте пырса кĕрсенех эпир кăмака

ҫинчен тӑваттӑн: манран аслӑрах пичче—Мӗтри, эпӗ тата икӗ шӑлӑм „кукаҫи кучченеҫ илсе килчӗ пулӗ-ха“ тесе пӗр харӑс карниз урлӑ пӑхрӑмӑр. Кукаҫи яланах кучченеҫлӗх панулми кукли илсе килекенччӗ те...

— Мӗнле пурӑнатӑр, ачасем?—терӗ кукаҫи ӑшӑ кӑмӑлпа, малтан аннене, унтан пире алӑ парса тухса.

— Лайӑх-ҫке,—тетпӗр эпир: Мӗтри, эпӗ, Петя, Тимах...

— Ма кӑмака ҫинче ларатӑр? Анӑр, ҫамрӑклах кӑмака ҫинче ларсан хевте пӗтет этемӗн: тула тухсан часах пӑсӑлма пулать апла.

— Ҫӑпата ҫуккӑ... Атте тавӑрӑнсан туса парать акӑ...

— Пушӑчӗ пур-и?

— Пур,—терӗ анне.—Ӗнер Ӗсмӗл пасарне кайса икӗ кӗрепенке хӑмла сутрӑм; ҫав укҫапа пӗр тӗрке пушӑт илсе таврӑнсаттӑм та, кайса шӑтерейӗмерӗм-ха.

Кукаҫи ҫав кунах пушӑта Киреметри кантӑр кӳллине кайса шӳтерчӗ. Тепӗр икӗ кунран пире ҫӑпата тума вӗрентме тесе ятарласах килчӗ.

— Ну, Мӗтри, эсӗ миҫе ҫулта ҫак?—ыйтрӗ вӑл манӑн аслӑрах пиччерен.

— Тӑххӑрта,—тет Мӗтри.

— А эсӗ, Кӗркури, миҫере пулатӑн?

— Çиччĕ тултарса саккăра кайнă...

— Эй, апла пулсан мужик пулнă эсир иксĕр те. Ларăр-ха акă сак çине юнашар,—терĕ кукаçи.

Лартрĕ те пире каларĕ:

— Эпĕ саккăрта чухне хам валли çеç мар, сутлăх та тунă çăпата, а эсир иксĕр те çитĕнсе каччă пулса кайнă, çапах çара ураи ларатăр... Ăçта сирĕн намăс? Намăса пĕлес пулать кăштах...

Унтан йăпатса илчĕ пире кукаçи.

— Начар теместĕп эпĕ сире, ачисем маттур эсир: аннĕр сăмахне итлетĕр, тырă вырма пĕлетĕр, выртма каятăр, лашана лайăх пăхатăр. Ку—аван. Çак çул тата аннĕр иксĕре те хут вĕренме ярас тет-ха. Ку та лайăх. Эпĕ вулама-çырма мар, парта хушшинче ларма та вĕренмен шкулта, çавăнпа кашни утăмрах чăрмав тӳсетĕп. Ав, Кришка кукку вăрçăран çыру янă. Вуламалла, хамăн куç курать пулин те чухлаймастăп; лешайккинчи Пухвире кайса вулаттарма тиврĕ. Хам суккăр Çемук пекех... Ну, вот, калатăп-çке: сирĕн шкула каймаллах. А шкула кайма çăпата кирлĕ. Пĕрер мăшăр кантра явăр-ха акă,—терĕ пире кукаçи.

Эпир Мĕтрипе иксĕмĕр те кукаçи хушнă пек пушăта малтан шĕшлĕпе лайăх шăйăртăмăр, унтан стена çумĕнчи çеклĕрен çаклат-

са кантра явма тытăнтăмăр. Пĕрер мăшăр яврăмăр...

Кукаçи кантрана çурмаран хуçса пилĕк пушăт хучĕ те, сулахай пĕççи тавра çыхса лартрĕ. Унтан кантра çумне пĕр пушăт хучĕ, ун çумне икĕ енчен икĕ пушăт хутларĕ те татах тепĕр пушăт хучĕ. Сăмса хуçрĕ.. Эпир пăхатпăр.

— Куратăр-и?—терĕ кукаçи виççĕмĕш сăмсине хуçса пĕтерсе, çăпата пуçне лайăх калăпласа.—Куртăр-и? Пăхăр акă...

— Куртăмăр,—тетĕп эпĕ.

— Ну, вот. Ĕнтĕ эсир хуçăр-ха...

Кукаçи кăтартса пырать, эпир мăштăртататпăр. Анчах ман çăпата пуçĕ ним тусан та калăпа вырнаçмасть. Хăтлантăм-хăтлантăм— çук... Юлашкинчен кукаçине хăюсăр сасăпа каларăм:

— Пĕлместĕп эпĕ...

— А-а-а, йывăр-и?—терĕ кукаçи.—Ĕç вăл çăмăл япала мар, ачам... Ĕç вăл алăсене улпут пек кĕсъене чиксе çӳренипе пулмасть. Сире, айвансене, халĕ, çамрăкла, ал-ура хытиччен ĕçпе авас пулать. Çамрăкла йывăç та ăçталла авнă—унталла авăнать, пĕр ватăлсан авма çук ăна, вăл хуçăлать анчах... Этем те çаплах: çамрăкла ĕçе вĕренмесен кахалланса юлать, вăрра тухса каять тата. Е ашшĕ пурлăхне сутса ĕçсе-çисе ярса, сулланса çӳресе

irttereт ĕмĕрне. Сирĕн ялти Кухвăркка Çтапанĕ, сăмахран, çамрăкла пурнăç хăй пуçĕ çине килсен ашшĕ кил-çуртне сутса ĕçсе-çисе ярса вилме хатĕрленнĕ. Анчах вилĕмĕ хăй шухăшланă вăхăтра килмен унăн. Çапла вăл ун-кун çапкаланса çўресех ирттерет ĕмĕрне паян кун та.

Акă, эпĕ сире тепĕр юмах каласа парам, итлĕр, итлĕр те ан манăр,— терĕ те кукаçи, каласа пачĕ.

„...Амăшĕпе ывăлĕ пуранна. Амăшĕ вăйпитти çын, ывăлĕ пĕчĕк çеç ача пулнă. Амăшĕ ĕç ĕçленĕ, ачи вăйă выляна.

Пĕррехинче çак ача таçтан йĕп тупса таврăннă та амăшне панă.

— Анне, акă, эпĕ йĕп тупрăм,—тенĕ.

— Юрать, ачам, юрать,—тенĕ те амăшĕ, ывăлĕ йĕппе ăçтан тупнине ыйтса пĕлмесĕрех илсе пĕрене хушшинчи мăк çине чиксе хунă. „Çивĕчĕ куçлă пулнăшăн" ачашласа мухтанă вăл айван ывăлне.

Тепрехинче ывăлĕ пĕр ярăм шăрçа вăрласа таврăннă.

— Анне, акă, пĕр ярăм шăрçа тупрăм эпĕ, ме,—тенĕ.

Амăшĕ, ачи шăрçа ярăмне ăçтан тупнине ыйтса тĕпчеме шутламан, тўрех йышăннă куна та.

— Юрать, ачам, юрать, çивчĕ куçлă пул,

маттур!—тесе чĕрçи çине лартса пуçран савса мухтанă вăл чарусăр ывăлне.

Пурна-киле хай ача пысăкран пысăка хапсăнма пуçланă. Пĕвĕ çитĕнсе пынă унăн, ăспуçĕ харсăрланнă, алли-ури кунран-кун аскăнланнă...

Вунçичĕ çула çитсе тăнă çакă, каччă пулса тăнă, ача-пăча шухăшне пăрахăça кăларнă, пысăкран-пысăка хапăл тунă, мăнăран мăнна куç хывнă..."

Эпĕ, кукаçи каланине çăвара карса итлесе çăпата çинчен мансах кайнă.

— Хăлхапа итлĕр те, алăпа ĕçлĕр эсир. Икĕ алла пĕр ĕç теççĕ,—асилтерчĕ пире кукаçи. Унтан татах калама тытăнчĕ.

„... Йĕп чиксе куç курми пĕр тĕттĕм каç çак вăрă така çавăтса таврăнать. Никама сиссерес мар тесе çĕрхута типтерлет вăл такана. Куншăн та амăшĕ ывăлне пĕр сив сăмах та каламасть, ятлама мар, „асту, çын ан систĕр, ывăлăм" тесе çеç ятне тăвать. Ентсе кукар шăрши кăларасран пуç-урине пĕçермеççĕ çаксем. Пыршисене те çуса тертленсе тăмаççĕ вĕсем: авăн карти хыçĕнчи арман пĕвине кайса яраççĕ.

Хуçи, ĕçе кĕрсен пусма тесе ятарласа чĕртнĕ такан кукарне те астивсе пăхаймасть. Çав вăхăтрах „ăслă" амăшĕпе „чее" ывăлĕ çуллă яшка çиеççĕ.

— „Какай яшки чӗре патнех пырать... Малашне те ҫапла лайӑх ҫисе пурӑнсан самаях- чӗ, ывӑлӑм“,—тет амӑшӗ ывӑлне; ылханса ятлас вырӑнне ӳлӗм те ҫакнашкалах „ӑнӑҫлӑ“ пулма пиллет вӑл ӑна.

— „Маттур пул та чее пул, чее пул та ӑслӑ пул“,—тет путсӗр амӑшӗ ывӑлне.

Ывӑлӗ амӑшӗн канашне итлет, ывӑлӗ амӑшӗн сӑмахне кӗршет, ывӑлӗ амӑшӗ хушнӑ пек тӑвать: ҫӗрле ял ҫарататать те кӑнтӑрла ыйӑх сывӑрать...

Пурна-киле ҫын пулса ҫитнӗ ҫак ҫамрӑк ача. Вӑл хуран хӑрӑмӗ пек тӗттӗм ҫӗрсенче тӑп-тӑрӑ кӑнтӑрлахинчен витӗртерех курма пуҫлать. Тем-тем тума та, таҫта кайса кӗме те хӑю ҫитерне „ӑслӑ“ амӑшӗн малтан айван, аталанарахпа чарусӑр, ҫитӗнсе ҫитсен тӳр- ленме пӗлмен вӑрӑ пулса тӑнӑ ывӑлӗ.

„Йӗп—пӗчӗк япала, вӑрланӑ пулин, аптрасах каймӗ-ҫке, мана та сиен мар“—тенӗ тет амӑшӗ малтанах; пӗр ярӑм шӑрҫашӑн усламҫӑн лавкинче тавар пӗтмӗ-ха, мана та тӗрткелес ҫук“,—шутланӑ амӑшӗ каярах; пӗр така пуссан ҫинӗшӗн хуҫин выльӑх йӑхӗ пӗтмӗ-ҫке“,— тесе ӑшне пусарнӑ тет амӑшӗ пурна-киле, хӑйӗн тӑван ывӑлӗ виҫерен тухнине сисмесӗр, айӑпа айӑп вырӑнне хумасӑр, пулас намӑса туймасӑр, ял кулли пуласса аса илмесӗр...

Вӑхӑт иртнӗ. Амӑшӗ ватӑлнӑ, ывӑлӗ ҫирӗм

те пĕр çула çитсе тăнă. Çирĕм те пĕр çулхи каччăна эгем тени кĕртеймĕ тăна. Асар-писер вăрă пулса тăнă çак пĕртен-пĕр ывăл. Хăй шучĕпе шывра та путман, вутра та çунман вăл...

„Çут тĕнчере темĕнле вăй та виçене пăхăнать теççĕ",—терĕ кукаçи хăйĕнчен хушса.

— Кам?—терĕ Мĕтри халапа пӳлсех.

— Кам? Ваттисем,—ăнлантарчĕ кукаçи.— Вată çын, нумай пурăнса нумай чухланă çын суя сăмах кяламасть.

— Çак вăрă такапа тăранмасть. Лаша çавăтма тытăнать вăл. „Лаша хăйне те хăвăрт тартать, сана та вĕлт! анчах пытарать"—тенĕ пулать вăрă хăй ăсĕ-пуçĕпе.

Пĕр кĕркуннехи çумăрлă каç тимĕр кăвак ăйăр утланса тавăрăннă çак вăрă. Тимĕр-кăвак ăйăра çичĕ талăк пытарса усрать вăл картара. Пит кăмăлланă вăрă тимĕр-кăвак ăйăра; вăл ăна пасара кайса сутма хăяйман. Çĕрле апатланă та, çĕрле шăварнă. Çапла çичĕ талăк иртнĕ, саккăрăмĕшĕнче, çĕрлĕ шăвармa тесе шыв йăтса пынă чух ăйăр кĕçенсе ярать...

Ялйышсем сиксе тухса тӳрех шыраса тытнă хай лаша вăррине. Вĕсем ăйăр мăйĕнчен пăява вĕçерсе илнĕ те, вăррăн аллисене хыçалалла туса хĕреслĕн туртса çыхнă..."

— Вăрра-и?—тесе ячĕ Мĕтри...

— Вăрра çав,—таварчĕ кукаçи.—Пĕр халăх аллине лексен лайăх пăркăчлаççĕ вара...

— Мĕнле йăйăрĕ çине утланса тарман вăл?

— Халăхран тарса хăтăлаймăн, ачам,—терĕ те кукаçи:—Чим, ан чăрмантар-ха эсĕ, итле, пуçланă халлапа каласа пĕтерме пар,—терĕ.

— "...Унтан хурал пӳрчĕ çумне çавăтса пырса юпа çумне çыхса лартнă вăрра. Ĕçлĕ çынсем чан çаптарса халăх пухтарнă. Юпа çумне çыхса вăрра виçĕ талăк хушши асап кăтартнă:—„Кала, мĕншĕн капла çыхса хучĕçĕ сана?"—тесе пĕрин хыççăн тепри ыйтнă вăрăран.—„Вăрă турăм—çавăншăн"—кĕскен ответ панă лешĕ пĕтĕм халăха илтĕнмелле. Шăппăн калаçсан татах ыйтнă унтан, çинчен тата кашни çупкă панă..."

Калать-калать те хăйĕнчен хушать кукаçи:

— „Патак çиесси çăмăл япала мар, патак шăмă ватать вăл, намăсĕ мĕне тăрать тата мĕн тĕрлĕ пысăк çылăх çитменне...".

„... Пуç янă вара çав вăрра—этем ури пырса пусман сĕм-сĕм вăрмана, хăрушă çĕре—инçетри Çĕпĕре".

— Юмах мар пулĕ ку: чăн пулнă ĕçех пулĕ?—татах пӳлтĕм эпĕ куккаçине.

— Чăн пулнă,—терĕ вăл.—Ку ĕç эпĕ астăвасса Урхасра пулнă...

„... Пуç янине пăхма урам тулли хура халăх тапса тухнă; ăна курма ятарласах кӳршĕ ял-

сенчен те халăх пырса тăванна: ватти, вĕтти, çамрăкки—пурте.

Тухса каяс умĕн тимĕрленĕ вăрă сăнчăрĕпе чанкăртаттарса хăйĕн ватă амăшĕ патне пычĕ, тет.

„... Каланине итлемерĕн, ватă аннÿне шеллемерĕн, çынсем пек йĕркеллĕ пулмарăн, хĕвел çуттипе ялйыш пек усă курмарăн...“—çапла калама ĕлкĕрнĕ анчах ватă амăшĕ, ывăлĕ ăна пÿлнĕ, тет.

— „Эй, мана чунтан юратнă аннем! Эсĕ мана хăвăн варунта ÿтлентерсе асап тÿссе çуратнă. Эпĕ санăн кăкăр сĕчĕпе пĕчĕкрен пысăк пултăм...“—çапла пуçларĕ тет хăйĕн сăмахне.

Унтан çĕрте выртан çĕмĕрт хуллине илсе кăшăл пек авса каларĕ тет:

„... Ав, пăхсам; епле авнă—çапла авăнать... Вăрă тăвасси ман йĕпрен пуçланчĕ. Эсĕ „ан тив, ачам“, темерĕн, ывăлу вăрă тунине хирĕç сăмах чĕнмерĕн; хирĕç сăмах чĕнме мар, хăв ытларах пулăшрăн, çавăнпа ман тăван ялта ят çĕрчĕ, ют çĕршывра пуç çĕрĕ... Эсĕ мана хăв пăхса ÿстернине асăнса юлашки хут кăкăрна чуптутар“,—терĕ тет те, амăшĕн кăкăрне çыртса татса илчĕ, тет...

Çак халлапа çăпата хуçма вĕреннĕ хушăра итлерĕм эпĕ. Чылай пулать ĕнтĕ вăл—çирĕм çула яхăнах.

— Вот,—терĕ кукаçи юлашкинчен.—Ăнлантăр-и? Ача-пăчана пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтармалла. Унтан ырри çук. Çамрăкла ĕçе вĕрентнĕ пулсан, лаша вăрри те пулас çукчĕ-и тен. Амăшĕ айăплă уншăн: ĕçлеттермелле пулнă, айванлах лайăх вĕрентес пулнă çав пӳтсĕр ачана. Ĕçлеме пĕлмен пулсан, вĕрентес пулнă. Кирлĕ чухне ачашла та, кирлĕ чухне ятла ача-пăчана...

Çакăн хыççăн эпĕ хам тĕллĕн çăпата тума пуçларăм. Кукаçи калавне яланлăхах астуса юлтăм. Тӳрĕ кăмăллă пулнине ним те çитмест çав çĕр çинче.

---

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Анлă Амур | 3 |
| Чикĕ тăрăх | 16 |
| Çĕн хулари кив этем | 81 |
| Пурăнатпăр пурăнăçа | 91 |
| Кукаçи калавĕ | 99 |

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

Редактор **Стихван Шавлы.**

Подп. к печати 20/VI—41 г. НТ 3523 Печ. л. 3,5
Тираж 3.000 экз. Заказ № 285.

Типография № 1 Упр. издательств и полиграфии
при СНК ЧАССР, г. Чебоксары. Дом печати.

2
O.I.K.

Цена 1 р. 80 коп.

Г. САВГАЙ

# ЧЕСТЬ

ОЧЕРКИ и РАССКАЗЫ

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941